К С(Чув)
С 22
Ч-36765



Национальная библиотека ЧР
4-036765

КР
КС (Чув)
С-22

*Людмила САЧКОВА*

# *ЫТАРАЙМИ КУÇÇЕМ*

Прозăлла сăвăсем, калавсем, очерксем.

КР

*Шупашкар*
*2000 çул.*

УДК 894/ 344
ББК 84 (2 Рос-Чув)-4
С – 12

Обязат.

С 12 Сачкова Л.Н.
Ытарайми куççем. - Шупашкар: Чăваш Республикинчи писательсен фончĕн «Калем» издательстви, 2000 çул, 100 стр.

Авторăн юлашки çулсенче çырнă çĕнĕ произведенийĕсене кĕртнĕ. «Ытарайми куççем», «Хĕреслĕ çул» прозăлла сăвăсенче, «Пыра ларнă çăкăр» калавра, «Шурăмпуçпе» балладăра тата ытти хайлавсенче писательница паянхи çынсен пурнăçне çырса кăтартать, лирикăлла геройăн шалти тĕнчипе хĕрӳ туйăмне, чун ыратăвне, сисĕм пуянлăхне ĕненмелле те витĕмлĕн сăнарлать.

«Çăкăр ăшшиллĕ хĕрарăм» очеркпа та паллашма пултарать вулакан. Унта автор «Çăкăр» Уçă Акционерлă Обществăн генеральнăй директорĕн Елена Игнатьевна Бадаевăн кулленхи ĕçĕ-хĕлĕ пирки ăшшăн каласа парать. Кĕнекене кăларма пулăшаканĕ - шăпах çав очерк геройĕ - Е.И.Бадаева.

ПРОВЕРЕНО
20 10 19 СЕН 2017

ББК 84 (2 Рос-Чув)-4
© «Калем» издательство, 2000 ç.

4-36765

НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

# ЫТАРАЙМИ КУÇСЕМ

## /прозăлла сăвă/

Тăп–тăрă шыв–кӳль çийĕ. Чăп тулли киленĕçпе ачашланать. Тӳпери шур пĕлĕт шыва кĕресшĕн ĕнтĕ. Кур, епле капăрланать. Хумханать çыр хĕрринчи хăва. Сĕртĕнĕччĕ çӳçĕсемпе шыва.

Салтăнăттăм та сикĕттĕм эпĕ те ачашшăн та ăшшăн пăхакан кӳлле. Анчах сикиччен куратăп хам епле ишнине. Ишме пачах пĕлместĕп. Путатăп авăр тĕпне.

Путарассу пур, мĕн–ма илĕртетĕн мана?

* * *

Кĕр кунĕнчи кăвак тĕтре ăшне кĕрсен, тĕнче те манăçать пачах. Ура айĕнче çĕр çухалать. Çул та çук. Утма хăрушă. Сывлăш пĕтет. Эпĕ хам йывăрăша та туймастăп. Ирĕлесчĕ çак тĕтреллĕ куçсен ăшĕнче ним юлмиччен, хама хам та шыраса тупаймиччен, хама хам паллами пуличчен, хама хам ăнланми пуличчен. Тен, урăх çын

пулса çуралăп?.. Тен, саншăн çаплах асапланма пăрахăп?..

* * *

Çуллахи пусăра та тепĕр чух пăр упранать иккен. Кăвак пăр сыхлакан шыва ăсса пĕр сыпкăм ĕçрĕм. Шăл шанса ним пĕлми пулчĕ. Анчах та ăшхыппи лăпланчĕ. Шывне ĕçни мар, пăрне катса çини еплеччĕ – ши?..

Пăр пек сивĕ куçсенчен пăр катăкĕ катса илтĕм те — ăша ятăм. Ирĕлмест. Малтан чунăма шăнтса хытарчĕ, унтан чĕре пăрланчĕ, аллăмсем, часах урасем те утми пулчĕç.

Çав урам варринчи Юрпике эпĕ – ши вара?..

* * *

Тĕпчесе чуна илеççĕ çак куçсем, анчах мĕн тĕпчеççĕ вĕсем? Ăнланмастăп.

Е мана пĕлсе çитмен вĕсем? Е вĕсене каласа çитермен эпĕ темĕскер? Е манра хам курманнине кураççĕ вĕсем? Е улшăнса çитмен эпĕ йăлтах? Тен, хăвна шыратăн манра? Ху çухалса юлнă ман чунра?

Тĕпчесе чуна илетĕр. Мĕн ыйтасшăн манран?

* * *

Сӑмахсӑр калаҫма юратакан куҫсем. Ачашшӑн пӑхаҫҫӗ вӗсем. Ҫывӑха та пымаҫҫӗ, инҫех те каймаҫҫӗ. Хӗвел хӗлхемӗн кашни хӗлӗхӗпе йӑлкӑшса калаҫаҫҫӗ. Сӑмахпа каласа ҫитерми шухӑшсем ҫинчен, ытамра ирӗлсе пӗтейми туйӑмсем ҫинчен, мӗн пулни ҫинчен, пулманни ҫинчен, ыттисем ӑнланманни ҫинчен.

Каланӑ сӑмах — вӗҫсе кайнӑ ҫерҫи. Каланӑ та — унӑн хӑвачӗ пӗтнӗ. Сан куҫусенчи сӑмахсем вара вӗҫсе ҫухалмаҫҫӗ. Каламасӑр пӗлтернӗскерсен хӑвачӗ сан куҫ ҫ у т и ң н ч е упранать. В ӗ с е н е унта эпӗ пӑр витӗр те куратӑп, авӑра путсан та шыраса тупатӑп, тӗтре ӑшӗнче аташса кайсан та вӗсем ҫинех пырса тӑрӑнатӑп.

* * *

Ҫӳлтен пӑхакан куҫсем: куларах, тиркевлӗрех, япшаррӑн. Хӑйсен ӗлккенлӗхӗпе мӑнкӑмӑлланса, ҫиҫӗм хӑвачӗпе ҫунтарса, ӗнтсе ҫӗр ҫумне пӑталаҫҫӗ, шеллевсӗр асаплантараҫҫӗ.

Ҫапла, эсир хӑватлӑрах манран, эсир ҫӳллӗрех. Анчах ҫавӑн пекех ҫӳлтен пӑхма юрать — и вара ҫынна?

Эп тӳсейместĕп çак куççене. Эп пăрăнатăп вĕсенчен.

* * *

Хайсем çине пăхмасан, кӳренекен куççем. Çӳпçе тĕпĕнче шăрçа шыранă евĕр çав куç шăрçине шыраманшăн хыт кăмăлсăрланаканскерсем. Çу каçа ӳстернĕ чечекĕсене татманшăн кӳренекен улăх — çаран пек анлă куççем. Çарран чупса иртсе кайрăм та, çеçкесене çупăрласа юратрăм, анчах татма иментĕм. Мăйра манăн — сан куçусен савса пăхнă саманчĕсен шăрçалăх ярăмĕччĕ... Пĕшкĕнсен, вĕсене çухатасран хăрарăм.

Ан кӳренсемĕрччĕ, ытарайми куççем. Эпĕ чечексене татма пĕрре те шухăшламан.

* * *

Пин тĕслĕ йăлкăшать хирти шур юр. Алла тытатăп та — ирĕлет. Ăçта кайса çухалать — ши çав çутă?..

Çитмĕл çич тĕслĕ хĕлхемпе выляççĕ сан куçусем. Çывхаратăп та, утăмсерен пĕри сӳнсе пырать. Тĕлме тĕл пулнă çĕре пачах та пушă вĕсем. Каялла утатăп. Аяккалла кайнăçемĕн каллех çутала пуçлаççĕ вĕсем. Пасăрхинчен те

ытларах йăлкăшаççĕ, илĕртеççĕ, йыхăраççĕ, чĕнеççĕ хăйсем патне.

Чуна хытарса çаврăнса пăхмасăр утатăп аяккалла. Çил çаврăнса тухрĕ. Юр хӳсе лартрĕ умма. Çула та çухатрăм. Умри юр кĕрчĕ пин çутăпа йăлкăшать. Унăн çитмĕл çичĕ тĕсне пухса пĕтерейĕп — ши эпĕ çара аллăн?.. Е шăнăп та, кĕрсе ларăп çав кĕрт ăшне ... ĕмĕрлĕхе.

* * *

Çаврăнать, çаврăнать пус тăрринчи çут çăлтăр. Миçе кĕтеслĕ — ши вăл? Пĕрре, виççĕ, çиччĕ, тăххăр. Кашни çаврăнмассерен урăх тĕс, урăх выляв.

Пус тăрринчи çав çăлтăр пек улшăнаççĕ куçусем. Кашни хусканура — урăх сăн, урăх кăмăл. Пĕр вĕçĕм урăхла ӳкерчĕк.

Эп шутласа кăларайăп — ши çав кĕтессене?

Эп ăнланса пĕтерейĕп — ши çав кăмăл еккисене?

Çут çăлтăр вылявне куç илмесĕр пăхса утнă чух яр! ярăнса умма ун хĕмĕ ӳкрĕ. Яп — якаха шак чул. Хăш çаврăмри хăш кĕтесне катса ăшă салам ятăн — ши вара? Аллăмра — ăшă — ăшă çавра...

* * *

Пурҫӑн чӗнтӗр карчӗҫ кантӑка. Пытанасшӑн пулчӗҫ – и? Сыхланасшӑн пулчӗҫ – и? Е шухӑ ҫил ҫаврӑнса килсе шуйӑхантарса хӑварасран хӑрарӗҫ – и?

Асамлӑ эрешпе ҫуталакан куҫсен айӗнче пин ҫул тӑма та эпӗ хатӗр Ҫӗр ҫинче. Сивӗ хӗл кунӗсенче юр пулса ҫав кантӑка пырса эп шаккӑп, сан чӳречӳ ҫумне шӑнса эрешленӗп. Ҫу кунӗсем ҫаврӑнса ҫитсен, ҫумӑр пулса сан кантӑку ҫинче эп йӗрӗп. Чӗрем тапма чарӑнсан, сан умра чул юпа пулса эп хытӑп...

* * *

Тӗнчешӗн те тӗнче тӑвӑр тепӗр чух. Хӑйпе хӑех вӑрҫӑ вӑрҫать. Ахӑрса килет те аслати, ҫӗр питне ҫиҫӗмпе ҫунтарать.

Чуна та чуншӑн тӑвӑр тӗнчипех. Сӑртра та, айлӑмра та канӑҫ ҫук... Шур тутӑра пуҫран ыватнӑ евӗр, салтса ҫеҫ перӗттӗм чунри ыратӑва: куҫ умӗнчи санӑн сӑнна та, илӗртекен йӑл куллуна та, хӑрушӑ – ҫепӗҫ ытамна та...

Тӗнче те тӑвӑр ман чунра...

# ХĔРЕСЛĔ ÇУЛ

/прозăлла сăвă/

Çул хĕресленчĕ. Урăхла май çук. Нумай утрăмăр кашни хăй сукмакĕпе çакăнта тĕл пулмашкăн. Анчах çапла пуласса пачах та пĕлмен малтан. Халь пăхатăп та каялла çаврăнса — мĕн ĕмĕтленни, мĕн ăнтăлни — йăлтах çак хĕреслĕ çулшăн иккен. Хĕреслĕ çултан иртнĕ хыççăн хĕресне йăтса утма çеç вăй çитересчĕ.

* * *

Ыйтакана пама хушнă, çапаканран тарма хушнă. Пасарти ыйткалаканăн ывçи çине сарă укçа хутăм. Каялла килнĕ чух вăл симĕс хут укçа ыйтрĕ. Тепре кайрăм та, ун умĕнче... витре ларатчĕ, хăй купăс калатчĕ. Чĕтрекен аллăмпа хĕрес хутăм та хам çулпа утрăм.

* * *

Калаçрăмăр та пуль, тавлашрăмăр та пуль... Йĕтĕмĕр те, култăмăр та пуль... Çĕртине — çӳлтине асăнмасăр хăвармарăмăр. Тĕрĕслĕх шырарăмăр.

Çынсен чăнлăхне пуç тăррине витсе пăхрăмăр. Çĕлĕк те пулмарĕ, калуш вырăнне тăхăнма та юрамарĕ.

Çаруран та çарапуç эпир ялан. Пылчăкра çапла утма пире аван. Тен, тĕрĕслĕх тени çакăнта, тăван? Хĕрессĕр те, хĕреспе те пире аван...

* * *

Асапра çуралнă, асаппа ӳстернĕ ывăлсене йĕрсе вăрçа ăсататпăр. Хамăр кайран кунта ташлатпăр. Черкке шаккаса мухтав юрри юрлатпăр. Кама ырласа, мĕншĕн савăнса? Пĕлетпĕр – и? Çук, пирĕн пĕлес килмест... Капла çăмăлрах.

Кашни килтех вара – кăвак экран. Эпир хĕпĕртенине вилекен ывăлсем экран çинчен пăхаççĕ... Ывăлсем çеç мар, вĕсен ывăлĕсем те, ывăлĕсен ывăлĕсем те...

Шăпасем хĕресленчĕç, юнпа пĕвенчĕç...

* * *

«Чăваш! чăваш! чăваш!» тесе кăкăр çапакансем кашни кĕтесре. Чăваш кĕнекисене сутаççĕ кашни утăмра – чăваш паттăрĕсем çинчен, чăвашсен

улпучĕсем çинчен, чăваш патшисем çинчен.

Ачисем кĕнеке ятлă. Кĕнеке ятне асăнсан, çаврăнса пăхаççĕ, анчах... чăвашла калаçнине ăнланмаççĕ.

Кам валли çырнă – ши кĕнекисене? Хĕресленсе шухăшпа пурнăç уйрăлать вĕсенче.

* * *

Кĕвĕçӳ Генийĕ генилле сăмах каларĕ: «Пĕтĕм тĕнче ватăлтăр» тесе кĕлтурĕ. Ӳсекен курăксем ун ури айĕнче таптанса ванчĕç, хитре чечексем хăрса типрĕç.

Тапса тухрĕ вара тилпĕрен. Часах вăл гени ятне те, ун палăкне те сăр илчĕ, хупласа хучĕ. Тĕнче генисĕр те, чечексĕр те юлчĕ. Чăнах та, ватăлчĕ...

Кам çĕнĕрен хĕрес лартĕ – ши гени вилтăпри çине?

* * *

Хĕреслĕ çумăр çапса çăвать, пĕр енче – пăр, тепĕр енче – ăшă çумăр.

Пост хуралçи тăрать хĕреслĕ çул çинче: пĕр аллинче — хура – шурă патак, тепĕр алли — тăнлав патĕнче чыс тăвать.

Ырри те нумай пурнăçра, усалли те пайтах Çĕр çинче. Чысăмăр та, асапăмăр та — хĕреслĕ çул çинче.

# СĔВЕМ — СĔВЕМ ШУР ШУХĂШ

Поэт каланă сăмахсем — шăпчăк юрри, поэт каланă сăмахсем — хаяр аслати. Пĕрре хăратаççĕ чуна, тепре çемĕçтереççĕ, ĕмĕрсем иртсен палăк пулса юлаççĕ.

Чулсем те ванаççĕ, шывсем типеççĕ, эпирех те вилетпĕр, урăххисем килеççĕ. Поэт сăмахĕсене çеç вĕсем аса илеççĕ. Ытти вара йăлтах манăçать, тусан пулать, — эпир ĕçлени те, эпир йĕни те, эпир кулни те...

* * *

Çăлтăрсем пирĕн куçран пăхаççĕ уçлăхран. Эпирех те хирĕç пăхатпăр аялтан. Кашни куçа — пĕр çăлтăр, кашни чуна — пĕр ĕмĕр.

Эпирех те куçран пăхни, чун савниçĕм, — чунпа чун калаçни, çăлтăрпа çăлтăр выляни, тĕнчепе тĕнче савăшни.

* * *

Пĕчĕкçес çуткĕмĕл чуна ӳксе шăранчĕ, — чунăм çуткĕмĕл пулчĕ. Эс утакан тусанлă çулсем сан уру йĕррипе такăрланчĕç. Кашни йĕрне кусăм çине çакăттăм, вĕсемпе витĕнĕттĕм те çутă кунран тарăттăм, чунри çуткĕмĕл çутипе çеç пурăнăттăм.

* * *

Эп маннă пулăттăм сана тем пек... — манма хăват çитсен. Эп çăмăл пулĕ тенĕччĕ сана манма... кĕр кунĕсем çитсен; пире савса пăхнă хĕвеллĕ çĕр сив çумăрпа лӳшкенейсен.

Эп маннă пулăттăм сана тем пек...— манмà хăват çитсен. Манас тесе хытарнă кăмăл манра упранаймарĕ... Кĕрхи сив çумăра куçса сан сунчăку çине тумларĕ...

Эп çăмăл пулĕ тенĕччĕ сана манма, теприн çумне ларсан; ун куçĕнчи ăш хĕлхемсем мана савса ачашласан. Кĕтни пулмарĕ. Çук, илĕртмерĕç ют куçсенчи çут хĕлхемсем. Ют кулă та, ют алă та... — сивлек. Сансăр иртнĕ самантра пурте ют — хĕвел те, уйăх та, сывлăш та, тĕнче те...— ЮТ .

Эпĕ хам та — ЮТ.

* * *

Пурте ухмах, пурте тăрпалтай. Пурте пӳтсĕр, айван та тăмсай.

Ăсчахсем – и? Тăрри шăтăксем.

Тухтăрсем – и? Ăслă пулсан, хăйсем чирлемĕччĕç.

Пуçлăхсем вара – чăн-чăн сурăхсем. Вĕсемшĕн пулсан, йăпăлтат та кăштах, чĕркуççисене çутаткала – сана тем пекех юратма пуçлаççĕ вара. Пĕр-пĕр юлташу çинчен элек кĕрсе парсан, темрен те хаклă çын пулса тăран часах.

Кӳршĕсем алăка пырса ан шаккаччăр. Тăвар та, лавр та çук ман вĕсем валли. Вĕçе-вĕçне çити сыпăнтарма пĕлмеççĕ пулсан, ыйткалакан ĕнтĕ, тата кам пултăр.

Укçаллăрах арçын тавра çĕлен пек явкалан та пĕр кана, хĕвне кĕрсе вырнаç. Ăслă ухмах пулса та тăрĕ вăл часах.

Пурте у х м а х, пурте тăрпалтай. Институтсем пĕтернĕ имĕш, айвансем. Пит кирлĕ пулнă пуль пуçа ватма. Вĕреннĕ пулсан, тен, хам та тухаттăм ухмаха...

* * *

Кар! — карлать хура курак,
Кар! — карлать.
Юрлап теет пуль.
Саркайăк çумне пырса ларать,
Саралап теет пуль.
Хыт кăшкăрать хура курак,
Хыт кăшкăрать.
Саркайăка хуплап теет пуль.
Анчах итлекене йăлăхтарсан,
Хăй çине сурса хурасса пĕлмест.

* * *

Сывлăх пур чух — шухăшсăр çӳреçпĕр, сывлăх пур чух пурăнма васкатпăр. Сывлăх пур чух юрататпăр та, кураймастпăр та. Сывлăх пур чух нимĕн те çитмест: ылттăн та, çăкăр та, чап та...

Сывлăх пĕтсен тин ЧУН пирки аса илетпĕр. Анчах та пĕр çухатнă чуна ылттăнпа та сутăн илейместпĕр, чаппа та тавăраймастпăр, çăкăрпа та илĕртсе килейместпĕр.

* * *

Укҫа, укҫа, укҫа... сăмахĕ те укҫа пекех чăнкăртатать. Укҫа кĕрсен алла — пуҫ пĕлĕте ҫити каҫăрăлать. Укҫа ҫĕлен пек чăшăлтатса чун—чĕрене кĕрет. Укҫа ҫăмха пек — алра пĕр вĕҫĕм ҫаврăнать, ҫапла хăй тыткăнне илет, хăйĕн чури тăвать. Укҫа иртĕнтерет тар юхтармасăр кĕсьене кĕрсен; укҫа мĕскĕнлетет — сан кĕсйӳнтен пачах тарсан.

Ҫĕн уйăх тӳпене тухсан, эп кĕлтăватăп вак укҫа тытса: «Ҫĕн уйăха — туллилĕх, хура халăха — ҫăмăллăх, мана хама — ҫăкăр ҫимешкĕн кăшт укҫалăх».

* * *

Хура каҫшăн килнĕ хура шухăш хур кăтартрĕ шурă хурăна. Шурăмпуҫ килсе ҫуталсан та, хура шухăш шуралмарĕ каялла. Шурă хурăн вулли хура йĕрлĕ — йăрăм—йăрăм сăрланнă инкек. Хурăн ҫулĕ — хурлă Ҫĕпĕр ҫулĕ,— пуҫ янă ҫынсем такăрлатнă сукмак.

Ачаш пике пек ҫепĕҫ шурă хурăн илĕртет илемĕпе малтан чуна. Каярах тунсăх пулса чуна пусать те, хура хурлăхпа ыталать сана.

Пӗр–пӗччен ларать мӑнаҫлӑ ватӑ хурӑн — ҫул айккинче тискеррӗн курӑнать. Аялти турачӗсем йӗтре персе антарнӑ тейӗн, чи ҫӳлти — ҫӑхан евӗр курнать. Шурӑ тӗс юлман та ун вулли ҫинче. Хуп—хуран, хӑрушшӑн курӑнать ун ҫумӗнчи тӗнче...

Аякра пырать Чечня вӑрҫи. Эс ҫавна пире астутарасшӑн–ши?..

Килсерен ҫӳрет почтальон–инке, валеҫет повестка каччӑсене. Хурӑн ал сулать, ав, хуҫӑк турачӗпе...

## ШУРӐМПУҪПЕ

/баллада/

Ҫулӗ пылчӑклӑ пулчӗ, эпӗ ҫӗркаҫа вӑрман витӗр утрӑм.

Ҫак вӑрман илӗртетчӗ малтан: аякран мӑнаҫлӑн курӑннипе, вӑрттӑн асамлӑхӗпе, тӗрлӗ кайӑксен юррипе, ӑвӑспа хурӑнсен ҫулҫисен пӑшӑлтатӑвӗпе... Куккук сасси пуҫа ҫавӑратчӗ. Чӑтлӑх вӑрман пушшех кӑмӑла астаратчӗ — ҫырли те унта пылакрах пулас пекчӗ, кӑмпи те



Ч-36765
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
Чувашской Республики

картан–картан ларассăнччĕ, шĕшкĕ саппун арки тулли мăйăр тăкса параслаччĕ. Пуринчен ытла вара пин–пин чечек мана хăй ытамне илессе суннăччĕ...

Пĕтĕм çут тĕнче савăнăçĕ, пĕтĕм пурнăç пурлăхĕ вăрманта пуласса шанса тăраттăм...

Пурак йăтрăм та вăрмана кайрăм. Пурçăн тутăра хулпуççирен уртрăм, шурă саппуна умма çакрăм, вăрмана кĕнĕ чух шăхăрса кĕтĕм, сарă кайăк савăнса тăтăр терĕм.

Асра çукки – ырлăхпа, ĕмĕт антăхăвĕ — хурлăхпа.

Вăрман кĕтсе илчĕ мана ытамне сарса. Вĕлтĕр–вĕлтĕр Ăвăс çулçи çăтăл–çатăл ташларĕ, чакак такмакларĕ хăлха çумĕнчех. Шерепеллĕ, сараппанлă йывăççем карталанса вăййа тухрĕç. Çаврăм–çаврăм сассăр юрă юрларăмăр, хускалмасăр хумханса ташларăмăр.

Юнашарах капмар Хырсем тăратчĕç. Каш! кашлатчĕç харсăррăн. Яштака пĕр сарă Хырĕ куçăмран кайма пĕлмерĕ. Ёлккен кĕпи вĕл–вĕл вĕçетчĕ,

лӑс çўçĕ хумлӑн хумханатчĕ. Чӑтаймасӑр чупса пырса вулли çумне сĕвентĕм, чĕвен тӑрса чуптурӑм.

Шухӑ куçлӑ та сарӑ Хыр. Кам эсĕ?

Çырла пуçтартӑм Хыр тавра. Татса тутам çине хурса килентĕм. Ўпре çыртнине те туймарĕм, çĕлен сӑхнине те сисмерĕм. Хулпуççирен уртнӑ тутӑрӑм курӑк çине шуса анчĕ, шурӑ саппунӑм салтӑнчĕ. Эпĕ çаплах çырла çирĕм, пурак çинчен пачах та мантӑм.

Çырла пуçтарнӑ чух çырла çисен пурак пушах юлать иккен...

Вӑрманта сывлӑш пӑчӑланчĕ. Унтан çумӑр çума пуçларĕ: шĕпĕр – шĕпĕр, шĕпĕр – шĕпĕр... Çулçӑсем хўхлесе тумларĕç, йывӑççем тайкаланчĕç. Çиллĕ çумӑр алхасрĕ, туратсене хуçса вӑтӑрчĕ, Шĕшкĕ мӑйӑрне татса печĕ. Шапӑрах тӑкӑнчĕç вĕсем çĕр çине. Татас тенĕ мӑйӑр пухӑнмарĕ саппунӑм çине.

Чупсах шырарӑм хўтлĕх çумӑртан. Хыр вулли çап – çарах пулнӑран. Лӑс турачĕ ытла та çўлте, вӑл мана хўтĕлемерĕ пĕртте. Сасартӑк аça çапса çĕре кисретрĕ. Шарт! çурӑлчĕ сар Хыр, икке пайланчĕ...

Чĕрем те самантрах ванса арканчĕ. Питрен çупса çăвать сив çумăр. Пĕр йывăç та хўтте ямасть. Аманнă Шĕшкĕ хуçăк туратпа пите чĕрсе пĕтерчĕ. Сар Хыртан кўлешнĕ Чăрăш чĕнмесĕр ларчĕ. Шĕпĕлти Çăкасем пăшăл пăтти пĕçерчĕç кулса. Хурăн хурлăн пăхрĕ мана шеллесе, çапах вăл та çывăха ямарĕ.

Пўрнепе юнаса Вăрман мана вăрçрĕ: «Хырлăхри çырлана хурлăха çирĕн» — терĕ. Çĕрĕк тунката çине ларса эп йĕтĕм. Йăл илтĕм. Çумăр чарăнсан, хуллен малалла уксахларăм. Умра ман — пылчăклă çул, хыçра — аçа çапнă сар Хыр. Кас та пулса килчĕ. Пăтранчăк тўпере пĕлĕтсем таткаланчĕç. Хурланчăк кăмăлăм салху, ĕнтĕркенĕ ўт — пĕвĕм — чĕтренчĕк. Сасартăк умра ик симĕс куç хăмсарчĕç:

—Хр — р — р!

Вĕри сывлăш пите хăрушшăн пырса çапрĕ. Унтан темле Арçури сасси вăрманта шари! çухăрса ахрăмланчĕ. Мĕншĕн тўпери çăлтăрсем çывăхра? Эп Уйăх çинче — ши вара? Симĕс куçсем аялтан тĕсеççĕ халĕ мана. Э! Çук! Хулпуççирен çакăннă Кĕмĕл çурла.



Хурама тăррийĕ сарлака, вуллийĕ хăвăл. Те Арçурисем чупаççĕ вăшăл–вашăл? Пĕри ура тупанне кăтăклать, тепри çўçрен туртать.

— Атю– тю–тю–тю... А–тю–тю–тю...

— Эй, эсир! Манпа выличчен çав кашкăра хўтерĕр!

— Эс пирĕнпе вылятни вара кайран?

— Юрать.

— Атю!

Тĕпĕр–тепĕр! Ши! шăхăрчĕ Вăрман. Тепĕр самант — Кашкăр сасси те, симĕс куçсем те пач çухалчĕç.

Çĕрлехи çулпа аташса, те чупса, те вĕçсе Вăрмантан тухса тартăм. Куккук ман хыçран текех авăтмарĕ, тăмана сассипе Арçури ахăлтатрĕ.

Аякран тикĕссĕн курăнать Вăрман... Эпĕ пурне те куртăм унта паян: çатăлти Çăкана та, кĕвĕç Чăрăша та, пăшăл пăтти пĕçерекен Çăкасене те. Пылак çырлине те тутантăм, сарă Хыра та юратрăм. Вара ăнлантăм: Вăрман шелсĕр иккен: юрри хитре, тути пылак, ытамĕ — хӳтлĕхсĕр. Чечексем унта паян ... пачах та çук.

Шухăш, шухăш... Унăн çăмхине хутăрласа эп çул çинчех сĕнк пулнă. Такам хулпуççирен кăлт! тĕкрĕ. Никам та çук — çке. Кам вăратрĕ?

Çĕн кун пуçланать иккен. Шурăмпуç килет: пĕр сассăр, лĕм çилсĕр. Хĕвелтухăç енчен Тӳпене хуллен хăпарать. Сисĕни — сисĕнми утăпа ачашшăн кармашать çӳлелле. Уйăха пилĕкрен çупăрлать, Çăлтăрсене чуптуса сӳнтерет.

— Сывă — и?

Ăшпиллĕ кулă ман умра. Ачаш та вăйлă алăсем вăшт! çеç ура çине çĕклерĕç.

— Ай!

— Уксахлатни?

— Çĕлен урана сăхнăччĕ.

Шăрçаласа тирнĕ сывлăм шерепи çакрĕ чĕркуççирен. Суранăм самантрах сипленчĕ.

—Çĕклен çĕр çинчен. Çӳлелле тинкер.

— Мĕн пур унта?

— Ирĕклĕх, мăнаçлăх тата... чечек-сем.

— Тӳпере чечексем?

— Шурăмпуç килнĕ чух çурăлаççĕ. Кур, акă сарри. Шăпах сан хăлха çакки. Кăвакки куç тĕспе килĕшет.

— Хĕрли?

— Вăл — ман тутам çинче.

— Эпĕ татам-и ăна?..

Шурăмпуç ытамĕ ачаш. Чечек çеçкисене эп пĕрерĕн суйларăм, кашни самантпа киленсе ачашлантăм. Вĕсене пуçтарса пуçкăшăль парнелерĕ савни.

— Пуç çинчи чечексемсĕр хĕрарăм илемсĕр. Ан хыв эс ăна нихăçан та.

— Шанать-çке вăл вăхăт иртсен.

—Шурăмпуç килсен, çĕнĕрен чĕрĕлет. Эс манса çеç ан кай мана

кĕтмешкĕн. Çак саманта асра хăвар. Кур, çут тĕнче епле чипер. Йăмралăхра тĕтре тĕлĕрет—ха лăпкăн. Часах çĕкленĕ те Хĕвел, унпа пит çăвĕ. Çуткӳлĕре — пирĕн сăнсем. Кăвак çут витĕр тинкерсем.

—Парсам парнелĕх çавă тĕкĕре.

— Парнелĕх тĕкĕр — арканнă телей. Сăнӳкерчĕк те — уйрăлу. Эсĕ ман сăнара чĕрере упра.

Çут Шурăмпуç чĕрки çинче эп ярăнтăм, эп савăшрăм саркаланса. Чи çӳллĕ инçетре хама мăнаçлă туйрăм, чи ачаш ытамра ĕлкҫеннĕн ирĕлтĕм, чи хитре куçсенче хитрен эп курăнтăм. Самант та кунта ĕмĕртен хаклăрах.

Акă Хĕвел çĕкленсе тӳпере хуçаланчĕ. Савниçĕм хăлхаран мана пăшăлтатрĕ:

— Ан ман Шурăмпуç илемне. Эп килĕп кашни ирхине.

Мĕнех Çĕр çинче чечексем çуккишĕн! Ман пуç тăрринче — пуç кăшăлĕ—çеçке! Мĕнех унтанпа ман ыйхă çĕтнишĕн? Эп курнăçатăп ирсерен Шурăмпуçпе...

# КĔТӲ ХĂВАЛАНĂ ЧУХ

/калав/

Тул çутăлас енне кайнă. Шурăмпуç хăпарать. Лĕм çилсĕр шăплăх. Ерипен–ерипен сĕвĕрĕлсе çухалакан кас сĕмĕ витĕр йывăç–курăк çулçисем чĕлтĕр–чĕлтĕр палăра пуçларĕç. Тăри сассине паркалать.

—Тăрр... Тăрр...– тесе хăйне–хăй хистенĕн юрлакалать те шăпланать.

Çырмари шапасем, тĕлĕрнĕ майăн, çăварĕсене шăхлич хыпнăн, вĕçĕмсĕр р–р–рлатса лараççĕ.

Акă, шăпчăк ирхи юрра пуçларĕ: çуллахи ырă куна мухтаса куçне хупсах каçса кайса шăрантарма пуçларĕ:

— Чиу –чив, чив–чив...

Вăрани–вăранми, палăри–палăрми ĕнтрĕк. Мĕн пытаннă–ши унта? Мĕн илсе килет çĕнĕ кун?...

Çывăрса юлнă автан чалт! пуçне çĕклерĕ. Çунаттисемпе хăлаçланса сулкалашрĕ те, каçăрăлса, мăйне тăсса, пĕтĕм ял илтмелле авăтса ячĕ:

—Ку–рăр–ха! Тул çу–тăл–нă!...

Ытла хытă тăрăшнипе шерте çинчен чутах персе анатчĕ, сулăна – сулăна кайса аран тытăнса юлчĕ. Пĕр кана пуçне чалăшшăн тытса итлесе тăчĕ: «Паçăрах авăтаççĕ – ши ялта ытти автансем? Е манпа çес пĕрле пуçларĕç?.. Мура каймĕ – и, авăтас – ха çине – çинех!»

Тачка киккирикĕсене чĕтрентерсе, шавларĕ те шавларĕ çак автан. Часах алăк шалтлатни, витре чăнкăртатни илтĕнчĕ. Çилли карăннă ĕнесем мăраннăн кавлесе мăшлатрĕç, ĕнерчĕç. Часах акă, хырăмшăн кастаракан хăлăхсăр сыснасем те çухăрма пуçларĕç.

— Ленук, тăр! Тул çутăлчĕ. Ĕне суса кĕтĕве хăваламалла.

— Ай – яй!.. – хĕрача карăнса ачашланчĕ. — Тăрас килмест. Кăштах çывăрам – ха...

— Тăрах, хĕрĕм, тăр. Кахал ан пул, — пуç çинченех витĕннĕ утиялне сирсе, хĕрĕн кăпăшка çӳçне ачашларĕ мăнаккăшĕ. — Шур пушмакна тăхăнса тухассу килмест – им?

Йăл! çиçет хĕрача тути, пăт! путать икĕ пичĕ. Ĕнер хуларан хăнана çитнĕ —

мăнаккăшĕ ăна валли хаклă парне илсе килнĕ–çке–ха! Ытарма çук капăр шурă пушмак: çӳллĕ кĕлеллĕскер, шĕвĕр пуçлăскер, пичĕ çинче – тăха, тăхаран сарă вăчăра усăнса анать.

— Кăна пули–пулми çĕре тăхăнма юрамасть.— Тӳрех асăрхаттарчĕ хăна Ленука.

— Акатуйне! Юрать–и?–пушмакне икĕ аллипе кăкăр çумне тытса хĕпĕртет вунпиллĕкри хĕрупраç.

— Акатуйĕнче халăх нумай, уруна таптаса пĕтерессĕ. Унта ан тăхăн.

— Апла пулсан, клуба! Артистсем ыран спектакль лартма килеççĕ.

— Каçхине хуçăк турат тĕлне лекес пур,–пушмак питне чĕрсе пĕтерен. Е такăнса, кĕллине катса пăрахăн. Тата тĕттĕмре кам кураять сан пушмакна? — те шеллет парне хуçи хитре япалана, те шахвăртать? Ленук аптрарĕ.

— Вара хăçан тăхăнас ăна?

— Кĕтӳ хăваланă чух. Ир тăрса кĕтӳ хăвалама тухакан хĕрсене ял çинче те хисеплеççĕ, ĕçчен теççĕ.

— Ах, тур! Вара çĕнĕ япала тăхăнап

тесе ман çапла ир тăмалла — и? — пушмакне енчен енне çавăркаласа пăхрĕ Ленук.

— Эс çав тери кахал хĕр — и? Шур пушмак илсе парсан та кĕтӳ хăвалама тухасшăн мар — и? Пăх — ха эс ăна?..

— Тухап, тухап, мăнакка! Ан вăрç. Юрĕ — и? — йăкăлт — якăлт сиккелерĕ хĕр, куçкĕски умĕнче чарăнса тăчĕ. Мăнакка, тăхăнса пăхам, юрĕ — и?

— Юрамасăр, сан валли илсе килнĕ пуль.

Эх, саркаланчĕ хĕрача! Эх, авкаланчĕ тĕкĕр умĕнче! Малтанах салтак пек кĕли çине пусса таклаттарса утрĕ, унтан — тӳррĕн тăрса пăхрĕ, чалăшшăн та тĕсерĕ шур пушмакне, хыçалалла çаврăнса, çӳллĕ кĕлесен стайлăхĕпе савăнчĕ, ташласа та илчĕ. Юлашкинчен, акăш пек çăмăллăн утма хăнăхса çитсен, пушмакĕсене хыврĕ те шурă пирпе шăлса, куçкĕски айне лартрĕ.

Паян, иркӳлĕм, мăнаккăшĕ ыйхăран вăратсан, вăл тӳрех шур пушмакне тытса хĕпĕртерĕ. Унтан тапаçлана — тапаçланах ĕне чĕччисене туртрĕ. Лешĕ, хăнăхман

алă пынипе, çиллине хытарса лартрĕ.

Пӳрнисем пĕлми пуличченех тăрмашрĕ Ленук; – суса пĕтерчĕ – пĕтерчех. Амăшĕпе мăнаккăшĕ кулкаласа – пăхса тăчĕç.

— Хĕр шутне кĕрсе пыран, иккен, хĕрĕм, пушмаклă та, ĕнеллĕ те пултăн.

— Анне, сан куласситпех. Мăнакка хистесе тăратрĕ те...

— Сăвах, су, хĕрĕм, малашне ĕнӳне кĕтĕве те хăвах хăвалăн, эппин. Ман ĕç тата нумай – ха.

Хапхасем уçăлчĕç. Килсеренех выльăх – чĕрлĕхе кĕтĕве хăвалама пуçларĕç. Чи малтан ватă кинеми Шашук



аппа тухрĕ. Шап-шурă таса тумпа вăл, аллинче – слон шăмми пек яп-яка тӳрĕ туя.

— Кай, патакку та пулин ху пекех сан, пĕр турат, пĕр шăрпăк çук, – тĕлĕнет Паçа, унăн кӳрши.

— Аларах якалать у. Пур ĕçе те хамăр алăпах тăватпăр вĕт.

— Çапла-ха та... – тем аса илчĕ те Паçа, ăшталанса ӳкрĕ. — Хас! Уткала атя, хăвăртрах! Санпа нумай чăрманса тăма вăхăт çук. Ĕç çунать.

— Ĕçӳ мар, эс ху çунан ĕçре. Кăшт кӳнĕрех пул ĕнтĕ. Ĕне лаша мар, ăна сиккипе чуптармаççĕ.

Чĕнтĕрлĕ курница умĕнче хĕрарăм кĕпе çунине курсан, Шашукпа Паçа чарăнсах тăчĕç.

— Çинук кин, эс мĕн ирех шыва кĕрсе ӳкнĕ?

— Эй, ан та кала! Ир тăр та, кипке çу! Ир тăр та кипке çу! Ĕмĕр иртет ĕнтĕ çаплах шуйттан ачи-пăчине пăхсах...

— Чипер калаç, Çинук кин. Ачусем хăвăнах. Ĕнӳне кĕтĕве ямастăн-им тата?

— Эй, ара, чăнах та... – çине

хуралнă çĕтĕк халат çакса янă хĕрарăм аллине аркăпа сăтăркаласа, хапхи патне чупса пычĕ, алăкне уçса ĕнине хăваларĕ.

— Тух, атя, тух, пĕтме маннăскер!

—Çинук, мĕн пулнă сана ирех? Мĕн — ма шуйхашатăн?

— Картиш тулли выльăх — чĕрлĕх, пӳрт тулли ача — пăча, — ниçта пăхса пĕтерме çук! Леш саттани ĕнер кӳпсе килчĕ те, çывăрать харлаттарса. Вăратсан та, тăмасть.

— И — и — и! Кинĕм, хăвăнне хăвах пĕл. Юлах, ĕнӳне хамăр хăваласа кайăпăр, — Шашук аппа кӳршĕ выльăхне хăйĕн яка патаккипе тĕккелесе хăвалама пуçларĕ.

Арăмĕ вилнĕренпе виççĕмĕш çул пĕччен пурăнакан Çитăр мучи текех ĕне усраймасть. Качакипе путеккисене çынсемпе пĕрлех кунсерен кĕтĕве хăвалать, каçхине хирĕç тухса кĕтсе илет. Ютшăнать арçын, никампа та ытлашши сăмах вакламасть, иртсе каякан машинăсене çеç икĕ пӳрнине тăратса саламлать. Чĕнмесĕрех качакине сăвать, чĕнмесĕр апат çиет, хапха умĕнче ларать,

ытларах хӑй тӗллӗн тем шухӑша путса ҫӳрет... Яланах ҫапла пулман — ха вӑл. Арӑмӗ, Таис сывӑ чухне килӗштерсе те шӑкӑл — шӑкӑл пурӑнатчӗҫ. Вӑл вилнӗренпе вара — ҫунатти хуҫӑлчӗ тейӗн — тӑруках кичемленчӗ, тӑруках чӗмсӗрленчӗ. Пурнӑҫ хавасӗ пӗтрӗ Ҫитӑрӑн.

Мучи качакисене хӑваласа иртсе кайсан, пӑлан пек ӗнине ҫавӑтса, хапхаран Ленук тухрӗ: чечеклӗ улӑх евӗр кӗпе тӑхӑннӑскер, уринче — шурӑ пушмак.

Пурте тӑруках ун енне ҫаврӑнса пӑхрӗҫ. Чипер те черченкӗ, ҫутӑ хӗр сӑнарӗ ирхи куна темле асамлӑ сӑн кӗртсе ячӗ... Тӑруках урам та хитререх курӑнса кайрӗ, хӗвел те ӑшӑрах пӑхнӑн туйӑнчӗ, вырӑх — чӗрлӗх ӗрлешни те ҫепӗҫ кӗвӗ пек илтӗнме пуҫларӗ. Тӗнче хитререххӗн, пурнӑҫ савӑкраххӑн туйӑнма пуҫларӗ.

— Ырӑ кун пултӑр... — именсе шӑппӑн сывлӑх сунчӗ хӗр пурне те.

— Сана та, хӗрӗм, ырӑ кун сунатпӑр. Кӗтӳ хӑвалама тухас терӗн — им? — кӑмӑллӑн кулкаларӗ туйи ҫине тӗревленнӗ Шашук аппа.

— Тухас терӗм ҫав... Вӑхӑт ҫитнӗ терӗҫ...

— И–и, çитмесĕр, çитнĕ. Пĕве кĕнĕ, ав.

— Эх, епле чипер хĕр!

— Чиперри те чипер, ĕçчен тата, — пăшăл пăтти пĕçерме пуçларĕç хĕрарăмсем, — Эх, кин тăвасчĕ!

— Ир–ха, çамрăк! Эс пит хыпăнсах ан ÿк–ха!

— Пушмакне пăхăр–ха! Пушмакне...

— Çавăнпа тем тăруках ÿссе кайнă пек пулчĕ–çке !

— Ма ун пекех капăр тăхăннă–ши?

— Такам ăс панă пуль ĕнтĕ. Ĕлĕк хамăр та çын çине çапла лăпăс–лапăс тухман. Иркÿлĕм пушшех те. Халь... — аллине лаш сулчĕ пĕри.

— Ĕлĕкрех аннесем, асаннесем пуçа сурпан сырмасăр çын умне мар, хуняшшĕ умне те тухман, теççĕ. Темшĕн хам та паян ирех çакна аса илсе шухăшласа çÿреп–ха. Çулла, шăрăх чухне те тăла сыратчĕ асанне. Çуса шуратма супăнĕ те пулман вĕт–ха. Сĕлтĕпе ухнă, пĕрех ялан шур тумпа çÿренĕ. Чăваш шурă тăхăнма юратнă. Халь вара çын çине лăппи–лаппи тухатпăр.

Эс, Шашук аппа, яланах чыслӑ çӳрен-ха. Ялта пĕрре. Эпир вăт — çĕтĕк кухайккă та тĕссĕр-пуççăр саппун-кĕпе.

— Ку хĕр сан уттуна пусаканни пулать ĕнтĕ. Епле маттур!

— Чим-ха, Хветура каллех ĕнине хăваласа тухман-çке паян! Чӳречинчен шаккăр-ха! Кĕтӳ тапранчĕ!

— Хветура, кĕтӳ каять! Ĕнӳне хăвала! — тан-тан! шаккарĕç чӳречерен.

— Ай, паччушки, çывăрса юлнă! — çӳçлемес пуçне чӳречерен кăларса пăхрĕ лешĕ.

— Эс ялан çывăрса юлан! Ыйхă чăпти!

— Эп айăплă-и вара уншăн? Ыйхă çапла та ман...

— Эс çывăрса юлнăшăн кам айăплă-ха? Çап-çамрăк хĕрсем тăрса тухнă, ав. Эс пур... Тух хăвăртрах, ан пакăлтатса тăр! Кĕтӳ каять, ав!

Ӳппĕн-тĕппĕн сирпĕнсе тухрĕ Хветура урама. Ĕнине суман, карăннă çиллинчен çĕре сĕт тумласа пырать. Хăй вара... çатта-çарамас ӳт çинчен аркăллă саппун çакнă та... вĕçтерсе пырать! Хăрах

аллинче — тем вăрăмĕш патак, тепринпе саппун аркине вĕçе — вĕçĕн тытса хупланам пекки тунă...

— Хас! Хас! Хас теп!

Тăракан — пĕри ăнтан кайнипе хытса кайрĕ. Хветураран халиччен те сахал мар тĕлĕннĕ — ха. Пурăна — киле хăшпĕр хăтланкаларĕшĕсене хăнăхса та пычĕç кÿршĕсем: пит çумасăр çÿрет, çÿретĕрин; виç — тăват хут саппун çакса тухать, тухин. Хăйсем те тепĕр чух çапларах çаккаласа яраççĕ. Меллĕрех пек — и: пĕри — хуран патне пыма, тепри — алă шăлкалама; пахчаран сухан татса кĕме.

Çуртĕнче тĕрĕс — тĕкел витре пĕрре кăна Хветуран. Унпа пусăран шыв ăсать, унпах урай çăвать, çав витренех чÿхекелет те сĕт сума каять. Кÿршĕсем хăнăхнă ĕнтĕ Хветура вĕсем патне витре кивçен илме чупнине. Пурпĕрех парса яма тăрăшмаççĕ. Тытать те çиччас сысна валашки вырăнне усă курать.

Паян та витри пушă марччĕ Хветуран. Чăхсем валли çăнăхпа улма пăтратса лартнăччĕ. Васканă чухне ĕне сума пушатса тăрас мар терĕ. «Кайран, кĕтĕве кайсан, суса килĕп — ха» — терĕ.

Хветура саппун аркипе купарчине хупласа пынине пăхса тăрса юлнă çынсем шавласа кайрĕç.

—Тьххy! Кай, намăссăр! Сăмах çитмест! —лачлаттарса сурчĕ пĕри.— Хĕрарăм ятне ярса çӳрет!

—Ăна кура çамрăксем вĕренсе пыраççĕ, ак. Мода тейĕç!

— Мĕн тума шаккарăн ун чӳречине, пĕреххут!

— Кам пĕлнĕ вăл саппун вĕççĕн урама сирпĕнсе тухасса!

Ĕнине сиккипе хăвалакан Хветуран умçаккинчен пĕр енне пĕр кăкарĕ, тепĕр енне тепĕр кăкарĕ тухса кайнă та сулланса пыраççĕ. Ăна—кăна йӳпсĕнмерĕ—ха вăл, çавах ĕнине сиккипе хăваларĕ. Мăнтарăн выльăхăн тулли çилли те чупнă майăн енчен—енне сулланса сĕт сирпĕтрĕ.

Ик—виç хĕрарăм каçса кайса кулчĕç. Çитăр мучи тӳсеймерĕ:

— Камран кулатăр? Хăвăртан—и? Ĕлĕк пулсан, ял пухса чĕн пушăпа хĕненĕ ун пеккисене. Иртĕнме паман. Халь — ирĕк, чаракан çук тетĕр—и?..

Çитăр мучи çаврăнса утсан, тăруках пурте шăпланчĕç, вăрттăн пăшăлтаткаласа, килĕсене саланма пуçларĕç.

—Э—ха—хай... Пархатар пĕтет, иккен... Тата мĕн курасси юлчĕ—ши?—текелесе, Шашук аппа та хуллен килнелле утрĕ.

Ленук çеç хытса тăрса юлчĕ. Никама сăмах чĕнме те, хускалма та хăрарĕ вăл. Такам ятран чĕнсен, çаврăнса пĕр утăм турĕ те тӳрех ĕне лаплаттарса хăварнă ăшă икерчĕ çине пусрĕ...

# ПЫРА ЛАРНĂ ÇĂКĂР

## /калав/

Хĕвел ăшши çĕр питне ăшăтмалăхах çук паян. Сăнĕпе çеç савăнтарать сарă кун. Янкăр сивĕ. Сăрт тӳпеминче симĕс курăк пуçне кăларнă. Ем—ешĕл, пурçăн пек ачаш çулçăсене сăхмашкăн Варук çамрăк хур чĕпписене хăваласа тухрĕ. Çерем çине çитсен хураçи ик çунаттине сарсах ташлама пуçларĕ. Ăратти хунанăшăн, тулăх апат çине тухнăшăн савăнчĕ—тĕр. Какăлтата—

какăлтата ами те хирĕç ташша тухрĕ. Йĕри–тавра çаврăна–çаврăна ташлать вĕт... Тамаша! Çын тейĕн... Варук вĕсене аптраса пăхса тăчĕ. Кун пеккине курманччĕ–ха вăл. Хураçи ташла–ташла мансах кайрĕ,– ним уямасăр тапăртатса чĕпписене таптама пуçларĕ. Акă, пĕр чĕппин мăйĕ çинех лаплаттарса пусрĕ.

—Шимп! – турĕ те мĕскĕн, палтах месерле çаврăнса ӳкрĕ.

—Эй, мур илесшĕ хурĕ, ху чĕппӳсене ма таптатăн?! — кăшкăрса ячĕ Варук.

— Çитет ташласа! Кшша!

Хулăпа хăмсарни кăмăлне каймарĕ курăнать йăх пуçне, тапăçма хăтланчĕ: сăхасшăн пулчĕ хĕрачана, çунаттисемпе хăлаçланчĕ.

Çын çынах. Варук, пĕчĕк ача пулсан та, вăрăм хулăпа патакласа çĕнтерчĕ хур аçине.

— Кăшш, кăшш кунтан. Ăнманă хураçи! Чуххăм! Кăшш!

Лешĕн ташлас кăмăлĕ иртсе кайман иккен–ха. Чĕписенчен айккинерех хăваласа янăскер, татах ик урине

ылмаштара–ылмаштара кускаларӗ, кикаклатса, амине йыхӑрчӗ. Варук ун мыскаринчен йӑлӑхса ҫитрӗ ӗнтӗ, тепӗр май ҫаврӑнса ларчӗ, аманнӑ чӗппе хӗвне чиксе ӑшӑтрӗ, йӗкӗр ывӑҫӗ ҫине хурса сӑмсинчен ӑшӑ сывлӑш кӑларса вӗрчӗ, ӑна симӗс курӑк татса пачӗ. Ҫук, хур чӗппи пӗрех майне ҫӗклеймерӗ. Куҫ хупанкийӗсем хупӑнсах, хупӑнсах пычӗҫ. Хӗрача питӗ шеллерӗ мамӑк пек ҫемҫе тӗклӗ чӗппе. Епле ачаш, епле хӳтлӗхсӗр вӑл! Варук ӑна пичӗ ҫумне тытса юратрӗ. Ҫук, хур чӗппи пӗрех утнаккӑланаймарӗ. «Шимп» – теет ҫеҫ аран–аран. Хӗрачан йӗрес килсе кайрӗ ӑна шелленипе, хураҫи енне тарӑхса ҫаврӑнса пӑхрӗ. Лешӗ ытлаван курӑк сӑхма пуҫланӑччӗ. Варук хӑй енне пӑхнине курчӗ те татах тапӑртатма пуҫларӗ.

—Эй, санпа!..

Кӗсйинче пӗҫернӗ икӗ ҫӑмарта пурччӗ. Пӗрне кӑларса шуратрӗ, чӑмласа хур чӗппи ҫӑварне хыптарчӗ. Те апачӗ тӑкӑскӑ пулчӗ, те майне хытах амантнӑ – хур чӗппи ҫӑтса ярраймарӗ. Ывӑҫри виҫ– тӑват тумлам шыва ӗҫме тертленчӗ–

тертленчĕ, ниепле те майне çӳлелле çĕклесе антарса яраймарĕ. Юлашкинчен халтан кайрĕ, ахăр. Вăрăм майне çерем çинех тăсса хучĕ. Варука вăл вилме хатĕрленнĕ пекех туйăнчĕ.

Ытти чĕпсем ним шухăшсăр курăк сăхаççĕ, унтан чупса кайса шыв ĕçеççĕ. Варук вĕсене икĕ çăмартине те тĕпретсе пачĕ. Лешсем кăпăртаттарсах çисе ячĕç. Акă, пĕр мăранрах чĕппи шыв ĕçнĕ майăн ытларах каçăрăлчĕ – и, кучĕ çинех кайса ларчĕ. Тăриччenex курăк сăхма пикенчĕ те ушкăнран айккинелле сулăнчĕ.

— Кăш! Умра сахал – им сан валли? Айккинче хурчка чĕрнине лекесшĕн – и? Пĕсехӳ те тулнă вĕт – ха, ăçта танкăшан?

Варукăн хăйĕн те хырăмĕ çатăр! выçса кайрĕ. «Çăмартине чĕпсем çиччĕрех, мана валли атте çăкăрпа канихвет илсе килсе парать», — чĕпписене тыта – тытса юратрĕ Варук. Амине килĕшмерĕ пулас çакă, хăмсарма пикенчĕ.

«Хĕрĕм, килте çăкăр пĕтнĕ. Çăнăх та çук. Аçу Патăрьельне каять паян. Килнĕ чух кăнтăр тĕлĕнче çăкăр парса хăварĕ. Эсĕ хурсемпе çул хĕрринчи сăртламара çӳре – ха», — тенĕччĕ ăна ирхине амăшĕ.

— Миçе çитрĕ — ши?

— Шимп?..

— Атте килет — ши?

— Шимп — шимп?..

Хĕвел пуç тăррине хăпарса çитеймен çав — ха.

Шимплетекен чĕпсем вĕçĕмсĕр курăк сăхаççĕ те хыпаççĕ, чăмламасăрах çăтаççĕ. Ассийĕ çеç ура çине тăраймасăр тапкаланса выртать, ху — урлăхлăн шимплетсе сас паратъ. Хураçи ĕнтĕ чĕпсем хушшинчех çӳрет, ташлама пăрахнă. Акă вăл аманнă хур чĕппи патне чупса пычĕ те х — х — хлатса сăхса илчĕ. Лешĕ мĕскĕнĕ хускалмиех пулчĕ.

— А — ах! Усал хураçи! Ăмма тивен чĕппӳне?!

Хуллипе хураçине таçта çитиех хӳтерсе ячĕ Варук, унтан чĕпсене сăсăл пăтратса пачĕ. Ушкăнпа тăпăлтарма пуçларĕç, хăшĕ — пĕри чыхăнсах кайрĕ. Шыв ĕçкелесе пĕчĕк сăмсисене сулла — сулла тасатрĕç. Амăшĕ вĕсене хăйĕн çунатти айне пухрĕ. Тăраннă кăмăлпа ачашшăн шимплетсе тĕршĕнчĕç пĕчĕкскерсем. Вĕсене кура, Варукăн та

тĕлĕрес килчĕ. Анчах выç хырăм канăç памарĕ. Ун пирки манас тесе тем те шухăшласа пăхрĕ хĕрача. Курăк хушшинче чупса иртекен кăтка курчĕ: «Ку та апат шыраса чупать ĕнтĕ. Хырăмĕ выçнă пуль»...

Ӳпне выртса, тӳпенелле тинкерме пуçларĕ. Шурă кăпăшка пĕлĕтсем катрам-катрам чупаççĕ: пĕри — сурăх пӳтекки, тепри — лаша пек, йытă евĕрли те пур.

«Хă, пĕлĕтсем чĕрĕ япаласемех-ши? Çиес килет-ши вĕсен?..»

—Ай-ай... Атте хăçан килет-ши?

Варук Патăрьел çулĕпе килекен машинăсене тĕмсĕлсе кĕтме пуçларĕ:

— Кунпа килетех пуль-ха атте!

Машина çывхарса пынăçемĕн Варукăн хырăмĕ çатăр выçса кайрĕ. Çăварне шыв килчĕ.

«Акă, атте çак машинăран анать те мана çăкăр е кулачă парса хăварать. Канихвет те илсе килĕ-ха, тен?...»

Пылак ĕмĕтсемпе хавасланса ларакан Варук умĕнчен машина пăван пек нăрласа иртсе кайрĕ. «Ман санпа ним те ĕç çук» тенĕнех туйăнчĕ. Хĕрача мĕскĕннĕн пăхса тăрса юлчĕ ун хыçĕнчен.

«Тен, автобуспа килет?»

Куç илми тĕмсĕлсе кĕтрĕ ăна хĕрача. Анчах чарăнас кăмăлпа сывхармарĕ çав мăнкăмăллă автобус. Çутă чӳречисемпе хĕвел çинче йалтăртатса васкавлăн таçта инçете вĕçтерчĕ. Темле илемлĕ, хавас та тулăх пурнăç самантлăха куç умĕнче курăнса çухалнă пек туйăнчĕ, — сăхлантарса хăварчĕ хăй хыççăн. «Таçта пурах ĕнтĕ вăл çав ырă тĕнче. Такамсем пурăнаççĕ ĕнтĕ унта. Тăраниччен çăкăр çиеççĕ, тутлă канихвет ĕмеççĕ, хитре кĕпе тăхăнаççĕ... Сивĕ те мар пуль унта. Кунĕ—кунĕпе хирте пĕччен хур чĕппи пăхса çӳреме те кăларса ямаççĕ пуль... Камсем—ши вĕсем? Ăçта пурăнаççĕ? Тен, пуласлăхра ăна та кĕртĕç унта?..»

Автобус иртсе кайрĕ, куçран çухалчĕ. Хырăмĕ выçнă хĕрача кичем те сивĕ хирте хурсемпе пĕччен тăрса юлчĕ. Ĕмĕтри шухăшсем ăна таçта инçете—инçете йыхăрчĕç.

— Пи—ип! Пи—пи—пик! Пи—и—иип! — тăрук шарт сиктерсе хыттăн кăшкăртрĕ сывхаракан грузовик.

«Хă, мĕн пулнă ку машинăна?—

çул çинче никам та çук, — урнă пек кăшкăртса килет»... — аптрарĕ Варук, ура çине тăрсах тинкерме пуçларĕ.

Машина вара кăшкăртать те кăшкăртать. Тем хистерĕ, хĕрача çул хĕрринех тухса тăчĕ. Грузовик кузовĕ çинче тăрса пыракан çынсем кабинăна шаккаççĕ, такама темшĕн вăрçаççĕ. Варукăн ашшĕ те пур иккен вĕсем хушшинче: кабина чӳречи умне ӳпĕнсе шофера тем калать, Варук çине тĕллесе кăтартать.

— Чар—ха ĕнтĕ, чар! Авă ман хĕрача тăрать! Çăкăр çеç парса хăварап!

Шофер хăлăхсăр, ним илтмен пек рульне пăркаласа пырать.

— Чар теп машинуна! Самантлăха çеç!

Çук, вăл итлемест, машинине тата хăвăртрах хăвалама пуçларĕ.

— Хĕрача выçă çӳрет иртенпе! Çăкăр çеç парса хăварап!

— Лартса тухни çитмен! Чарса çӳре тата çул çинче сирĕншĕн!

— Хыт ан хăвала—ха, эппин! Çул хĕрринчех вăл! Аллине тыттарса хăварам, тем пек тархаслать Варук ашшĕ.

Çук. Тусан мăкăрлантарса, вĕтĕ-шакă чул çеç сирпĕнсе юлчĕ грузовик хыççăн.

— Вару-ук!...

— Атте!

— Варук, тыт! — ашшĕ çăкăра çур-маран хуçрĕ те çул айккинчи курăк çине ывăтрĕ, хыççăнах пĕр ывăç канихвет персе хăварчĕ. Ывăтнă çăкăр Варука кăкăртан пырса çапрĕ, антăхтарса ячĕ...

Чулпа персен те, кун пек ыратман пулĕччĕ хĕрачан чĕри. Çав самантра вăл хăйне анчăк çури пек туйса илчĕ. «Йытта çеç çапла çăкăр ывăтса параççĕ вĕт, — çиссе илчĕ ун пуçĕнче шухăш. — Ытти пур выльăха та апата çăвартан хыптараççĕ е умне хурса параççĕ». Епле вăл паян хур чĕпписене алăран апат çитерсе тăрантарчĕ... Çăкăра ывăтса пама тивнĕшĕн ашшĕ айăплă маррине те лайăх ăнланчĕ хĕрача. Çапах та ăна çилленес кăмăл чун тĕпне сиввĕн анчĕ... Хырăмĕ выçни те самантрах иртсе кайрĕ... Варук йĕре-йĕре канихвечĕсене çул хĕрринчен пуçтарчĕ, кĕсйине чикрĕ. Çур çăкăрне вара аллине тытас килмерĕ. Каярахпа хырăмĕ

чĕпĕтсе çатăр выçнине те туйса илчĕ вăл, çапах та çăкăрне те, канихвечĕсене те çăвара хыпаймарĕ... Яра куна ăша хĕлхем ямасăр ирттерчĕ.

Каç та пулчĕ. Хур ушкăнне хăвалаласа, Варук килне таврăнчĕ. Хăрах аллинче унăн — вилнĕ хур чĕппи, тепринче — çимен çăкăр. Хур чĕппине хĕрача сăмахсăрах амăшне аларан тыттарчĕ, çăкăрĕпе канихвечĕсене вара — сăнчăрти йыттине ... ывăтса пачĕ.

— Хам! — турĕ çеç лешĕ, çăкăра сывлăшрах хыпса чăмлама пуçларĕ....

## ЧИКЕ СТАРИК ЁМĔЧĔ

Кантура пырса кĕрсенех никам та курăнмарĕ. Апат вăхăчĕ. Мĕн тăвăн? Килнĕ çын кашни алăках туртса пăхрĕ — пĕри те уçă пулмарĕ. Кĕтесри пĕр пĕчĕк алăк çеç юлнăччĕ — ун хăлăпне пырса тытас тенĕ чухне чĕри — ик! туса уçăлчĕ. Антонина Петровна, çÿллĕ те стайлă, парка хĕрарăм, пÿлĕмрен никам та тухманнипе аптрарĕ, хушăкран пуçне чиксе пăхрĕ. Шалта никам та çук. Мĕн амакĕ? Кĕрсе пăхас — ши тесе вырăнтан хускалчĕ çеç...

—Эй–эй–эй, чимӗр–ха, чимӗр. Чӗрҫилам таптаса каясшӑн–и капла? – илтӗнсе кайрӗ темле ҫинҫерех, ачанни евӗр сасӑ таҫтан аялтан.

—Ай–уй, кам ара кунта? – пӗр–пӗр шӗвӗрккене таптарӑм пуль тесе пӑшӑрханса ҫӗрелле пӗшкӗнчӗ хӗрарӑм.

— Мӗн кирлӗччӗ? – кӳреннӗ кӑмӑлне хытарса ыйтрӗ аялти арҫын.

Антонина Петровна тӗлӗннине пытармарӗ – куҫӗ чарӑлса кайрӗ. Ун умӗнче кӑптӑрмӑш чике старик тӑра парать. Асат хуҫнӑран курпунлӑ. Ҫиччӗри ача ҫӳллӗшскер, ун ҫине ҫӳлелле пы–ысӑк кӑвак куҫӗпе тинкерсе пӑхать. Аялтан ҫӳлелле пуҫне каҫӑртса тӗсесе тӑма аванмарланчӗ–и, коридора тухса, айккинерех кайса тӑчӗ. Капла ӑна сынпа калаҫма меллӗрех пулас.

— Кам кирлӗччӗ? — тепӗр хут ыйтрӗ вӑл.

— Директор кирлӗччӗ е тӗп экономист. Хуларан эпӗ. Ревизор. Паллашар: мана Антонина Петровна тесе чӗнеҫҫӗ.

— Савватий Иванович Малов.

Учетчик пулса ёҫлетӗп. Ыттисем апатраха. Директор та паян пулмасть пуль. Атьӑр, иртӗр ман пӳлӗме. Хӑй вӑхӑтӗнче эпӗ тӗп экономистра ӗҫленӗ. Кантур ӗҫӗсемпе кӑштах паллаштарма пултаратӑп.

Сӑмах ҫине сӑмах. Антонина Петровна ӗҫсӗр аптранӑ енне ҫак кӑптӑрмӑш чике старике тӗсесе ларчӗ. «Шалккӑ мӗскӗне — шеллесе шухӑшларӗ хӑй ӑссӗн. — Мӗн таранччен кӳренӳллӗ пуль вӑл хӑй шӑпине. Ҫемйи пур — ши? Яш чухне хӗрсем хыҫҫӑн та чупса курман ӗнтӗ вӑл, ҫакӑн пекскер. Ӗҫкӗ — ҫикӗре те ташласа — юрласа савӑнаймасть, хӑнана та ҫӳреймест пуль. Чӑнах, арӑмӗ, ачи — пӑчи пур — ши? Мӗнле пурӑнать — ха ҫак сын?»

— Эсир ӑҫта чарӑнтӑр? — ыйтрӗ Савватий хӑйне куҫ сиктермесӗр пӑхса ларакан хӗрарӑмран.

— Чарӑнман — ха, хӑна ҫуртне каймалла пуль. Ӑҫта вырнаҫнӑ вӑл?

— Ҫӗнни хута кайман — ха, кивви питӗ япӑх. Хальхи самана пекех. Атьӑр ман пата хӑнана. Эпир арӑмпа иксӗмӗр ҫеҫ пурӑнатпӑр виҫӗ пӳлӗмлӗ хваттерте.

Командировкăна килекенсем чылайăшĕ ман патра каç выртса каяççĕ.

«Вăт сана чике – старик. Ăçтан пĕлчĕ вăл ман шухăша?..»

— Юрĕ эппин, – килĕшрĕ Антонина Петровна хăй сисмесĕрех.

Апат вăхăчĕ иртрĕ пулас. Çынсем ĕç выранне пуçтаранчĕç. Антонина Петровна ревизи ĕçне пуçларĕ. Пĕр сĕтел хушшине хуçалла кĕрсе ларчĕ те ун тавра бухгалтерсем тĕрлĕ отчет – накладной хучĕсем йатса чупкаларĕç кăна. Савватий çеç хăй пӳлĕмĕнче шăпăрт ларчĕ.

Ĕç кунĕ вĕçленсен çынсем килĕсене саланчĕç. Антонина Петровна та хут тĕркисенчен хăпса коридора тухрĕ. «Ăçта çав Савватий, хăнана илсе каятăп тенĕччĕ – çке».

Алăк каллех чĕриклетсе уçăлчĕ. Савватий кăштăртатса тухрĕ. «Чăнах та питĕ сисĕмлĕ иккен. Асси çынсем хăйсем çапла – ши?» – вĕлтлетсе иртрĕ Антонина Петровна пуçĕнче шухăш.

— Атьăр, кайрăмăр – и вара?

— Кайрăмăр.

Чăнах та, виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер çак

этемĕн. Тирпейлĕ, самай пуян пурăнаççĕ. Хĕрарăм алли пурри сисĕнет. Авă, алăк çумĕнчи пăтара ахăртнех, арăмĕн пальтăвĕ çакăнса тăрать. Анчах та килĕнче никам та çук.

– Иртĕр, хывăнăр, ак кунта, малти пӳлĕме диван çине иртсе ларăр. Выртса канма та пултаратăр. – Чупкаласа çеç çӳрерĕ кил хуçи; хаçат – журналсем пырса пачĕ, телевизор ячĕ. Хăй вара кухньăна кĕрсе çухалчĕ. Антонина Петровна çул çинчен килнĕскер, питĕ ывăнса çитнĕччĕ. Çиесси те килетчĕ. Ирĕксĕртен çеç хаçат – журналсем пăхса ларчĕ. Унтан, хăй те сисмесĕр, диван çинче ларнă майăнах, пуçне тайса тĕлĕрсе кайрĕ.

Кăшт сĕмленсенех тĕлĕк тĕлленме те ĕлкĕрнĕ... Пĕр пĕчĕк йытă çури йĕри – тавра ачашланса явăнать пек, ури çумне сĕртĕнет пек. Антонина Петровна пĕшкĕнсе тытас тенĕ чух пушшех выляса сиккелеме пуçларĕ, ун алли çумне сĕртĕнсе ачашланасшăн пулчĕ... Ку ытла та чăн пек туйăннăран шартах сиксе вăранчĕ хĕрарăм.

Савватий ун аллине ачашласа ларать, иккен. Картах туртăнчĕ хĕрарăм.

— Эсир?.. —ним калама аптрарӗ вӑл тарӑхнипе.

— Эп ним те мар, ахаль ҫеҫ.

Каласа пӗтермен сӑмах иккӗшин хушшинче ҫывӑхлану ҫиппи карчӗ.

— Арӑмӑр ӑҫта сирӗн, Савватий?

— Кӳрше кайнӑ пуль. Часах килет. Эсир канӑр, акӑ минтер сире валли. Ҫывӑрса илӗр кӑштах.

Ҫывӑрма — и унта? Туххӑмрах ыйхӑ вӗҫсе кайрӗ хӗрарӑмӑн. «Ах, тур, арҫын темерӗн» — тарӑхса шухӑшларӗ вӑл.— Ҫак та пулин арӑмӗ пур ҫӗрте ютти ҫине пӑхасшӑн. Хӑй ҫын чухлӗ ҫын пулсан, татахчӗ — ха...»

— Килнӗренпе пӗр ҫӗрте ларса йӑлӑхса ҫитрӗр пуль. Чӳречерен пырса пӑхкалӑр, ытти пӳлӗмсене кайса пӑхӑр. Унта ав, ҫывӑрмалли пӳлӗм.

«Мӗн курман эпӗ чӳречерен?»

«Ҫывӑрмалли терӗ — ха, — каллех тарӑхрӗ Анна Петровна,— кухня тӗлне те кӑтартмасть. Хырӑм пасӑрах хыр тӑрне кайнӑ.»

Хӑй ҫапах та шавламарӗ. Калаҫас килмен енне хаҫат пӑхкалама пуҫларӗ.

Савватий диван пуçне Антонина Петровнăпа юнашар пырса ларчĕ. Капла вăл шăпах хĕрарăмăн янахĕ таран.

— Эсир çемьеллĕ-и? Ача-пăча пур-и сирĕн? -ыйтрĕ вăл шăппăн. Темшĕн ĕнтĕ шăппăн тата.

— Пур пулсан вара?

— Нимех те. Ыйтса пĕлес терĕм çеç. Эсир çав тери чаплă хĕрарăм. Сирĕн çинчен питĕ пĕлес килет. — Савватий Антонина Петровнăн кăпăшка çӳçне аллипе перĕнсе илчĕ. — Сире упăшкăр питĕ юрататъ-и?

— Вара?

— Нимех те мар. Эпĕ сире пĕрре курсах юратса пăрахрăм.

Савватий патвар та стайлă хĕрарăма инçетри горизонта пăхнă пек вăрăммăн, куçне хĕсерех чылайччен тĕсесе— тĕмсĕлсе пăхса ларчĕ.

Антонина Петровнăн кулас киле пуçларĕ.

— Кунта манпа юнашар ан ларăр. Айккинерех кайса ларăр-ха. Унтан лайăхрах курăнатăр эсир. Тинкеререх сăнаса пăхам. Тен, эпĕ те сире юратса пăрахăп...

Чике старик диванăн тепĕр айккине кайса ларчĕ. Шăп. Нихăшĕ те пĕр сăмах чĕнмеççĕ. Савватий, аллине пуçĕ тăрринче хĕреслетсе тытса диван хыçне тĕревленчĕ. Урисем, кĕске пулнипе, урайнелле те усăнаймаççĕ.

Антонина Петровна кулараххăн пăхса ларчĕ. «Тепĕр пĕчĕк хĕрарăм çумне çыпçăнсан та татахчĕ—ха. Мана, капан евĕр хĕрарăма, куçлама епле хевти çитрĕ—ши? Эй, Турă, çамрăк та мар вĕт—ха хăй. Кай—кай, пĕр путиш».— Çапла шухăшсемпе хăй ăссĕн айланса ларса вăл чĕнмерĕ. Савватий те сас памарĕ. Акă, куçне хупса, тутлăн кулса илчĕ вăл. Унтан ĕмĕтлĕн маччаналла тинкерчĕ; пысăк куçне чалăшшăн çавăра—çавăра, çÿлелле куç ыватрĕ.

Çапла ларсан—ларсан, чике старик пĕчĕк ача пек диванран аллипе тыткаласа урайне анчĕ те Антонина Петровна умне пырса тăчĕ. Унтан сасартăк чĕркуçленсе ларчĕ, ун урисене ыталаса илчĕ, пуçĕпе сĕртĕнсе ачашланма пуçларĕ. Капла пуласса кĕтменскер, Антонина Петровна ăна чышса ярасшăн пулчĕ, анчах Савватий

ун урисене хытă ыталарĕ, йĕри – тавра чуптума пуçларĕ. Хĕрарăм хайĕн урисене тăлласа лартнă пек туйрĕ. Вĕриленсе кайнă Савватий ун урисене чуптурĕ те чуптурĕ... Хай сиксе чĕтрет, пăшăлтатса тем – тем калать: «Юрататăп, юрататăп... Эсир манран кулатăр та пулĕ. Анчах пĕчĕк çыннăн чĕри пысăк теççĕ. Тархасшăн, тархасшăн, ан хирĕçлĕр. Эсир — ман чунри пĕртен – пĕр канăçми ĕмĕтĕм. Çĕр çинче никам та манран ытла Сирĕн пек хĕрарăма юратас тесе ĕмĕтленменмен пуль...»

Антонина Петровна хăрама шутламарĕ – ха унран: пĕрре лайăхрах тапсан, сирпĕнсе каять! Анчах хай çумĕнчен сиресшĕн темĕн чухлĕ тĕрткелешсессĕн те, чике – старик сĕлĕх пекех çыпăçса ларчĕ. Хай çаплах чуптăвать, тем – тем пăшăлтатать: «Эпĕ айăплă мар. Эсир вут хыптартăр мана. Сирĕнте – пĕтĕм тĕнче пуянлăхĕ! Эсир – çутçанталăк парни, тур пани!...»

— Çитет аташса! Хăп ман çумран!

— Ан хирĕçлĕр, ан хирĕçлĕр, тархасшăн, Антонина Петровна. Эпĕ такамран та ытларах юратма пĕлетĕп.

— Кирлӗ мар мана сан юратӑву, телейсӗрскер! Хӑп теççӗ!

— Çук, çук! Пултараймастӑп сирӗнтен хӑпма...

— Мӑшкӑлласа тӑрать-ха тата!

— Эп ахаль тумастӑп. Укçа нумай ман...

Савватий Антонина Петровнӑна чӗркуççирен çӳлерехрен чуптума пуçларӗ, пушшех вӗриленсе ачашланчӗ. Чӗтрекен аллисемпе хӗрарӑмӑн кӗпине уçма пикенчӗ... Йытӑ çури пек пуçӗпе ачашланчӗ. Антонина Петровна вӑй пӗтсе килнине туйрӗ... Тарӑхрӗ те, йӗрӗнчӗ те вӑл. «Пӑх-ха эс ӑна, чике старик темерӗн... ниепле те сирсе ывӑтма çук». Хӗрарӑм Савватие икӗ аллипе пуçӗнчен хытӑ ярса тытрӗ те çӗклесе илчӗ. «Таçта çити персе ывӑтам ак!» Анчах Савватий тӑрук ӑна мӑйран ыталаса илчӗ, тутаран чуптума пуçларӗ.

«Кай, йыт çури мар ку, çӳлевӗç»,—вӗçсе иртрӗ шухӑш пуçра. Савватий хӗрарӑм кӗпин ум тӳммисене вӗçерме пикенчӗ...

Антонина Петровнӑн чӗркуççийӗ çине

кӗрсе ларнӑ старик ӑна сывлӑш ҫаварса илме памасӑр чуптурӗ. Унӑн аллисем кӑкӑр ҫыххи ӑшне кӗрсе кайсан, хӗрарӑм чунӗнче тем пӗҫерсе кайрӗ. «Ҫук, пуҫа ҫухатиччен ку шуйттанран хӑпас пулать!» — вашт siксе тӑчӗ вӑл, пӗтӗм вӑйне пухса, хӗрӳ старике хӑй ҫумӗнчен сирчӗ. Унтан ун пуҫӗнче вӗлт ҫеҫ вӗри шухӑш выляса илчӗ. Савватие хул хушшине хӗстерчӗ те вӑл, тапкалашаканскерне ванна пӳлӗмне йӑтса кайрӗ, сивӗ шыв кранне пӑрса уҫрӗ...

— Ак ҫакӑнта сивӗн — ха кӑштах. Эп вара уттарам.

Васкавлӑн сумккине, плащне йӑтрӗ те, каҫ сӗмӗ ҫапнӑ урама чупса тухрӗ. Ҫумӑр ҫума пуҫланӑ иккен. Антонина Петровна ӑна пӑхмасӑрах хӑна ҫуртне танккарӗ.

Савватий вара ванна пӳлӗмӗнче кранран шӑпӑртатакан сивӗ шыв чашлавӗнче пӗр — пӗччен макӑрчӗ те макӑрчӗ...

# ÇĂКĂР ĂШШИЛЛĔ ХĔРАРĂМ

/очерк/

Кăмакара çатăртатса вут çунать: алхасмасăр, пуленкесене çулла—çулла. Çĕр çинче чĕртнĕ чи сăваплă вут вăл. Ăна питĕ ырă тĕллевпе ялкăштаракан çын — çăкăр пĕçерме ĕмĕтленекен чăваш хĕрарăмĕ

Елена Игнатьевна Бадаева. Эпир пĕлетпĕр: пулаççĕ—ха урăхла вутсем те тĕнчере: этеме тĕп тума хускатакан тискер вут—çулăмсем, асăрханусăр шар кăтартаканнисем...

Çăкăр пĕçерме хыпаланакан хĕрарăм çав хĕм сапакан вутпа ăшăнса хăй те çăкăрпа пĕрлех тутлă шăршă кĕрекен пулать.

Çапла, ку вăл — Елена Бадаева пурнăçĕн сăваплă илемлĕх енĕ...

Анчах та пурнăçăн тепĕр енĕ пур.

— Çăкăр пĕçерессси вăл — йывăр ĕç. Çăрмалла, çăрмалла, çăрмалла чустана çурăм тăрăх тар юхиччен. Вара тин вăл кăпăшка та тутлă пулать, тĕпренмест. Ача



чухне вара крахмал ҫăкăрĕ те ҫисе курнă. Фронтран аманса таврăннă аттене йышлă ҫемьене тăрантарма ҫăмăл пулман. Кĕркунне пухса ҫитереймен ҫĕрулмисем ҫуркунне уйри пылчăк ҫине шăнса тухса

выртатчĕç. Виç хĕрачана пĕр резина атăччĕ пирĕн килте. Эпир ăна черетпе тăхăнса хире тухаттăмăр та уйри пылчăка çăрса, çав çĕрулмисене пухаттăмăр. Кайран типĕтсе аллаттăмăр, крахмал икерчи пĕçерсе çиеттĕмĕр.... Эх–ха–хай! Халь кам шутлама пултартăр эпĕ ача чухне çавăн пек пурăннă тесе... Кулач пит çиес килетчĕ. Çав кăмăлах çăкăр заводне илсе килчĕ те пуль мана...

Елена Игнатьевна Бадаева 1946–мĕш çулхи çу уйăхĕн 9–мĕшĕнче Тăвай районĕнчи Çĕнĕ Ишпуç ялĕнче йышлă çемьере çуралнă, саккăрмĕш ача шутланнă. Вĕсен пурĕ вунă ача пулнă, анчах та япăх пурнăçа пула иккĕшĕ чирлесе вилнĕ. Пĕчĕккĕллех йывăр ĕçре пиçĕхсе ӳснĕ. Çуллахи вăхăтра колхоз йĕтемĕ çинче молотилкăпа тырă çапнă, уй–хирте çум çумланă, тырă вырнă,— аслă пĕлӳ илме ĕмĕтленнĕ...

Хăйĕн хастарлăхĕпе ĕçченлĕхне, çирĕп хавал–кăмăлне пула, мĕн ĕмĕтленни ун ытлашшипех пурнăçланнă. Паянхи кун Елена Игнатьевна Бадаева, тахçан Çĕнĕ Ишпуç хирĕнче крахмал

улми пуçтарса çӳренĕскер, — Республикăри тата тĕнче шайĕнче малта пыракан предприяти ертӳçи, Шупашкарти «Çăкăр» Уçă Акционерлă Обществăн генеральнăй директорĕ.

Пĕтĕм вăй – халне ĕçе парăнса ĕçлекен хĕрарăма патшалăх чыс – хисеппе тивĕçлĕн хаклană. Е. И. Бадаева ЧР Апат – çимĕç промышленноçĕн тата РФ Апат – çимĕç индустрийĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Вăл ЧР президенчĕ ячĕпе панă Хисеп Грамоти, ЧР Патшалăх Канашĕн, Ялхуçалăхпа апат – çимĕç министерствин Хисеп Грамотисене тата «Ĕçри хастарлăхшăн», «Ĕç ветеранĕ» медальсем илме тивĕç пулнă.

Хĕрарăм телейне çухатман вăл: çемье çавăрса упăшкипе пĕрле каччăпа хĕр çитĕнтерсе ӳстернĕ. Аслă ывăлĕ Юра малтан Шупашкарти пир – авăр техникумне пĕтернĕ, каярахпа Ялхуçалăх академийĕнче вĕренме пуçланă. Пĕлӳ илнĕ вăхăтрах амăшĕ ĕçлекен заводра сакăр çул хушши электрик пулса ĕçленĕ. Халĕ — мастер. Хĕрĕ — Натали, вăтам шкултан ылттăн медальпе вĕренсе тухнăскер, Раççейри Халăхсен туслăхĕн университетĕнче

вĕренет. Упăшки вара Шупашкарти сĕтел–пукан фабрикин цех пуçлăхĕнче вăй хурать.

Эпĕ, Елена Игнатьевнăпа калаçса ларнă майăн, унăн ĕçри пысăк çитĕнĕвĕсен тупсăмне пĕлес тĕллевпе тĕрлĕрен ыйтусем патăм:

— Мĕнрен пуçланнă сăкăр çулĕ?

— Çўп–çап шăлакан пулса пырса кĕтĕм эпĕ завода малтан. Пурăнма кĕтес те пулман: сăкăр вагонĕ çинчех çĕр каçнă. Темле ĕç те пурнăçлама тивнĕ; ял ачи пулнă та, пилĕк авма ўркенмен, тўсмеллине тўснĕ: çăнăх алланă, формăсене çу сĕрнĕ, кассир та, лаборант та пулса ĕçленĕ. Каярах вара — производство пуçлăхĕ.

— Тĕллевлĕ пулнă–и ўсĕм çулĕ?

— Ятарласа чапа тухас тесе хыпăнман, ĕçленĕ те ĕçленĕ. Чăнах та, тăрăшнă ĕнтĕ, çавă çеç. Хăй вăхăтĕнче Апатçимĕç Министерствин министрĕ пулнă Л. И. Вавилова, мана, ахăртнех, асăрханă пулĕ. Хам хирĕçленине пăхмасăрах, вăйпа тенĕ пекех Шупашкарти 3–мĕш сăкăр заводĕнчен куçарса, çак коллектива ертсе

пыма Хушу кăларчĕ, унтан 1-мĕш номерлĕ завод директорĕ пулма çирĕплетрĕ.

— Çитĕнӳсем ăс пухмасăр, вĕренмесĕр пулмаççĕ вĕт-ха?

— Çапла. Килĕшетĕп. Çавăнпа та, пайтах ăс пухнă. Малтан Мускаври Апат-çимĕç промышленноçĕн техникумĕнче заочно майпа виçĕ çул вĕреннĕ, унтан — Мускаври Пĕтĕм Союзри апат-çимĕç промышленноçĕн институтĕнче — ултă çул; квалификаци ӳстерекен курссенче те сахал мар пулнă. Производство ăнăçлă ĕçлесе кайтăр тесен, ху вĕренни çеç çителĕксĕр, рабочисене, производство пуçлăхĕсемпе маçтăрсене час-часах ют çĕршывсене опыт пухма яратпăр: Венгрире, Чехословакире пулчĕç вĕсем, Раççейри выставкăсене те час-часах тухса çӳреççĕ.

— Хăвăр пата йышăнатăр-и?

Елена Игнатьевна кăмăллăн кулса илчĕ те çапла хуравларĕ:

— Конкуренци вăхăчĕ. Пит йышăнсах каймастпăр. Килес текенсене экскури кăтартатпăр.

«Çăкăр» Уçă Акционерлă Обществăн бюджет умĕнче нихăçан та парăм пулман,

рабочисене ĕç укçи вăхăтра тӳлесе пынă. Халăх çак заводра пĕçерсе кăларакан çăкăр–булка изделийĕсене яланах юратса туянать: уйрăмах «дарницкий» ятлă çавра çăкăра килĕштерет. Ялти кăмакаран пиçсе тухнă евĕр вăл. Елена Игнатьевнăран хăйĕнчен те духи мар, çак тутлă çăкăр шăрши кĕрет...

Шупашкарти «Çăкăр» Уçă Акционерлă Общество кăларакан çăкăр–булка изделийĕсен ассортименчĕ пуян – 174 тĕрлĕ. Вĕсенчен паллăраххисен, халăх уйрăмах юратса туянаканнисен шутне çаксем кĕреççĕ: дарницкий подовый, полесский, формăланă шурă, монастырский, славянский, прибрежный, пикантный, сувенирный çăкăрсем, çĕпресĕр тата отрубисемлĕ икерчĕсем, нарезной, подмосковный, красносельский, урожайный, иçĕм çырлиллĕ, мăкăньлĕ, осенний, чайный, молочный, сдобный тата ытти батонсем, тĕрлĕ–тĕрлĕ тутлă булкăсем, кекссемпе рулетсем, сушкă–баранкăсем, печенисемпе рогаликсем, сдобăсем нумай кăларать завод. Халĕ, нумаях пулмасть вара ламинарипе

хутăштарнă çăкăр хатĕрлесе сутма пуçланă. Ку вăл — типĕтнĕ тинĕс купăсти. Унта пĕçернĕ çăкăр çынсен организмне йод çитменнинчен пулăшать, зобпа чирлесрен хăтарать.

Елена Игнатьевна Бадаева ертсе пыракан Шупашкарти «Çăкăр» Уçă Акционерлă Общество яланах халăх хушшинче хисепре. Унăн коллективĕ юлашки вăхăтра пысăк çитĕнӳсем тунă: «Малашлăх аталанăвĕшĕн» ятлă Пĕтĕм тĕнчери координаци совечĕсен программипе килĕшӳллĕн, Европăри экономика пĕрлешĕвĕн ассоциаци эксперчĕсем хутшăнса тата Пĕтĕм тĕнчери ĕçлĕ информаци агентстви 1998 — 1999 çулсенче Раççейри промышленность отраслĕсен тĕпчевĕ тăрăх, Шупашкарти «Çăкăр» Уçă Акционерлă Общество «Пысăк ылттăн клише» уйрăм приз илме тивĕç пулнă, хăйĕн продукцине унăн логотипĕпе маркировка тума ирĕк илнĕ. Çав вăхăтрах Пĕтĕм Тĕнчери «Инвестици тата Прогресс» президиум форумĕ çак предприятие «Инвест — 2000» проекчĕсен участникĕсен шутне кĕртнĕ, пысăк ылттăн жетонпа наградăланă.

Тепӗр пысӑк ҫитӗнӳ вӑл — «Ҫӑкӑр» Уҫӑ Акционерлӑ Обществӑн генеральнӑй директорӗ Елена Игнатьевна Бадаева «Эртсмейкер—2000» наградӑн преми лауреачӗ пулса тӑни. Урӑхла каласан, ҫак награда ячӗ «Планета сӑнне палӑртакан ҫын» тенине пӗлтерет. Ӑна никама пӑхӑнман экспертсен тӗпчевӗ тӑрӑх «Хайӗн предприятийӗн позицине ҫирӗплетнӗшӗн» тата ертӳҫӗ пултарулӑхне кӑтартнӑшӑн» номинаципе палӑртнӑ.

2000—мӗш ҫулхи пуш уйӑхӗнче Елена Игнатьевна Бадаевӑна тӗнче шайӗнчи тепӗр преми «Ҫулталӑкри чи лайӑх директор» ятне панӑ, Германирен «Хрустальная НИКА» диплом парнеленӗ.

Ҫак мӗнпур премисен хуҫи пӳлӗмре манпа чӑвашла сӑпайлӑн калаҫса ларчӗ. Ҫук, суятӑп, минутсерен ун патне ӗҫпе ҫынсем хыпаланса кӗрсе тухса каяҫҫӗ, тӗрлӗ хутсем ҫине алӑ пустараҫҫӗ. Пӗри, акӑ, ахаль рабочи, хваттер туянма пысӑк ссуда илме ирӗк илчӗ, тепри тата, чирлӗрех ҫамрӑк хӗрарӑм операцие каясси пирки пӗлтернӗ хыҫҫӑн, пӗр вӑхӑт хушши йӗрсе ларчӗ. Елена Игнатьевнӑн хӑйӗн те

кусӗсем шывланчӗҫ.

— Хӗрарӑмӑн шапи йывӑр ҫав, вӑл тин ҫеҫ икӗ операцире пулчӗ. Халь каллех каймалла тет, — манпа сӑмахларӗ вӑл чирлӗ ҫын пӳлӗмрен тухсан.

Кашнийӗшӗ ҫапла хӑйӗн хуйхи-суйхипе е савӑнӑҫӗпе паллаштарни мана малтан тӗлӗнтерчӗ. Тӗплӗнрех, тарӑнрах шухӑшларӑм та, вара ҫакна туйса илтӗм: кунти коллектива чӑмӑртакан, ӗҫлекенсене пӗр тӗвве пӗрлештерсе, ҫыхӑнтарса тӑракан вӑй вӑл — пысӑк чунлӑх иккен.

— Елена Игнатьевна, сирӗн заводра чӑвашсем ҫеҫ ӗҫлеҫҫӗ-им?

— Ҫук-ҫке. Вырӑссем те пур. Мӗншӗн ҫапла ыйтатӑр?

— Пуринпе те чӑвашла калаҫнине итлесе, тӗлӗнсе ларатӑп та-ха.

— Вырӑссемпе вырӑслах пуплетпӗр. Халь сан тӗлне чӑвашсем ытларах тӗл пулчӗҫ пуль. Вӗсемпе мӗне кура вырӑсла калаҫса курнӑҫланса ларас-ха?..

# «СЫВĂ—И, АЯКРИ ТĂВАН?»

/çул очеркĕсем/

«Чăваш тĕнчи» текен ăнлава тĕрлĕ çĕре сапаланнă халăхăмăрăн пурнăçне туллин курмасан тата унăн чунне туймасан ăнланаймастăн. Аякри тăванăмăрсем патĕнче эпĕ сахал мар пулса курнă: Самар, Пушкăрт, Мари Эл, Тутар, Мускав,Чĕмпĕр, Саратов енсенчи чăвашсемпе курнăçса паллашрăм юлашки виçĕ çул хушшинче. Çак çулçӳрев йăлтах ЧР Культура министерстви ытти республикăсенче пурăнакан чăваш наци культура центрĕсемпе йĕркеленĕ çыхăнусене аталантарас тĕллевпе ирттернĕ тĕлпулусемпе семинар–канашлусене, литературăпа культура, искусство кунĕсене хутшăннă майăн пулса пынă.

Малтанах Самар тăрăхĕнчи чăвашсем патне çитсе курнăччĕ.

Эпĕ хамран хам тĕлĕнетĕп тепĕр чухне: чунăм манăн вĕçĕмсĕрех инçе çула йыхăрать. Аякри чăвашсем патне çитсе килме кăмăлăм çав тери пысăкчĕ.Вĕсен

сăнне курас килетчĕ, вĕсен шухăшне пĕлес килетчĕ, вĕсен пурнăçĕпе паллашас килетчĕ. Мĕнлерех чăвашсем пурăнаççĕ – ши Самар тăрăхĕнче? Пурнăçĕ мĕнлерех – ши вĕсен? Килĕ – çурчĕсем еплерех? Мĕн çиеççĕ? Мĕн ĕçеççĕ? Мĕнлерех юрăсем юрлаççĕ, тĕрĕсем тĕрлеççĕ, ташăсем ташлаççĕ?..

ЧР культура тата национальоçсен ĕçĕсен министерстви тата Чăваш Наци Конгресĕ йĕркеленĕ ушкăнпа çула тухрăмăр. Делегаци йышĕнче – Республикăри гуманитари институчĕн литературăпа фольклористика пайĕн пуçлăхĕ Виталий Станьял доцент, ЧР Культура министрĕн çумĕ Михаил Краснов, Николай Карлин композитор, Шупашкарти Модăсен Çурчĕн паллă манекенщицисем, сăвăçсемпе журналистсем.

Самар тăрăхне кĕрсенех мĕн тĕлĕнтерчĕ – анлăран та анлă хирсем. Çак анлăхра чун та темле ирĕкленнĕн туйăнчĕ. Пĕрин хыççăн тепри чăваш ялĕсем ларса юлаççĕ. Пурте пĕр майлă темелле: тирпейлĕ те сăпайлă курăнаççĕ, таçтан та таçта сапаланса кайман, ял илемне ярса, ишĕлсе – юхăнса ларакан çуртсем çук. Урам

хушшисем йывӑҫлӑ. Калас пулать, ку хура тӑпраллӑ ҫӗрсенче тем ҫӳллӗш йывӑҫсем кашласа ӳсеймеҫҫӗ, пӳрт пӗрени тума кансӗр вӗсенчен. Карта—хурасене ҫавӑнпа кунта капашсӑр пысӑк лартаймаҫҫӗ. Ҫинҫерех йывӑҫран купаланӑ ҫуртсене тӑмпа шӑлса якатнӑ, шуртӑмпа шуратнӑ.

Кӗтсе илчӗҫ вара пире аякри тӑвансем!.. Кӑмӑлӗсем хӑйсенчен пысӑк, ...юратса, савӑнса, тунсӑхласа... Юн туртӑмӗ тени ҫавӑ ӗнтӗ вӑл.Тахҫанхи, ачалӑхри асран кайми сӑнсем эпир ҫитнӗ чӑваш ялӗнче тӳрех куҫ умне тухса тӑчӗҫ. Йӑмраллӑ, ҫырмаллӑ чӑваш ялӗ, хӗрарӑмсен икӗ аркӑллӑ чӑваш кӗпи; турахупӗ те, кӗнчелеҫҫи те, пурте, пурте пур. Мӗнлерех калаҫаҫҫӗ—ха тата чӑвашла! Тап—таса та ҫепӗҫ чӑваш чӗлхи,—калаҫнӑҫем сӑмах пӗтмест, шыв юххи пек юхать.

Эпир ҫитнӗ вырӑн Самар тӑрӑхӗнчи Чаллӑпуҫ районӗнчи Ҫӗнӗ Эштепень ялӗ пулчӗ. Кунта Чӑвашсен обществӑпа культура центрӗ питӗ хастар ӗҫлет. 1997—мӗш ҫулта йӗркеленӗ «Улах» обществӑра ултӑ ял тата колхоз ертӳҫисем, правлени членӗсем шутланаҫҫӗ. Эпир ҫитнӗ кун вара

вёсем анлă лару ирттерме тата сурхури уявĕ тума палăртнă.

Ялта çĕнĕ проектпа туса лартнă чаплă шкул питĕ илемлĕн курăнса ларать. Чăваш чĕлхипе кунта кашни класрах вĕрентеççĕ, иккен. Компьютер класĕ те пур. Кашни предметпах ятарлă кабинетсем уçнă. Çак чаплă та пуян шкула таврари чăваш ачисемшĕн малтан учитель пулса ĕçленĕ çамрăк бизнесмен Николай Давыдов нумай пулăшнă, иккен. Ялта икĕ лавкка тытса тăрать, халĕ тата пĕчĕк завод лартма пуçланă. Вăл кунта ирттерекен культура мероприятийĕсене спонсор пулса пулăшать. Чăваш культуришĕн тăрăшакан çĕнĕ чăвашсем те çĕкленеççĕ.

Шкулĕ пысăк, 175 вырăнлă, анчах та унта пурĕ те 44 ача çеç вĕренет. Библиотекăра ытларах учебниксем çеç, илемлĕ литература сахал. Краеведени кружокĕ, музей пур. «Самар ен» хаçат çырăнса илеççĕ /Сăмах май каласа хăварас пулать. Самар чăвашĕсем пĕр чĕлхе тупайманран çак хаçат часах тухма пăрахрĕ/.

Эпĕ Чаллăпуç районĕнчи «Союз»

ялхуçалăх пĕрлешӳ ертӳçипе Иван Янзатовпа калаçатăп. Вăл пĕлтернĕ тăрăх, кунти чăвашсем ытларах тĕштырă туса илсе, улма çитĕнтерсе тупăш илеççĕ.

Чăвашсем пĕр – пĕринпе çапла юратса тăван чĕлхепе пупленине пур чухне те илтеймесĕн. Аякра пурăнакансемшĕн чăваш чĕлхи питех те хаклă. Ман микрофон умĕнчен çын татăлма пĕлмест. «Çăлкуç» колхоз председателĕ Виталий Семенов чăваш уявĕсене анлăн ирттерме пуçлани çинчен каласа пачĕ.

Самар кĕпĕрне администрацин национальноçсен ыйтăвĕсемпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ Рашид Шакиров каланă тăрăх; Самар тăрăхĕнче чăвашсем, шучĕпе илсен, вырăссем хыççăн иккĕмĕш вырăн йышăнаççĕ, анчах та диаспора ыйтăвĕсене çĕкленĕ чухне чăвашсем хастарах мар иккен. Тутар çамрăкĕсем нумаях пулмасть пысăк фестиваль ирттернĕ. Мĕншĕн чăваш çамрăкĕсен хастарлăх кăтартмалла мар? Ачасен уявне те ирттермелле. Манас пулмасть, вĕсене хамăр культурăран пистерсен, пирĕн пуласлăх пĕтет.

Халăх туллиех шкулта: ачи – пăчи те,

çамрăкĕ те, ватти те... «Улах» обществăн фольклор ушкăнĕ чăваш юррисене янăратса ячĕ. Пурте пĕрле карталанса юрларĕç, чăваш ташши ташларĕç. Халăх çапла кар тăрса пĕр кăмăлпа çĕкленнине курсан, чăваш тĕнчи вăраннине туятăн...

Манăн вара ĕç пĕтмен – ха. Эпĕ Раççей Федерацийĕн Атăл тăрăхĕнчи националльноçсен политика министерствин уполномоченнăйĕпе Александр Конычевпа калаçатăп. Вăл çакăн пек уявсем, тĕлпулусем нумайрах ирттермелле, анлăрах, час – часах тусан аван пулни çинчен калать. Çывăх вăхăтра Чăваш Республикинче Раççей Федерацийĕнчи мĕнпур чăвашсен культура центрĕсен координаци центрне йĕркелесе ятарлă конференцисем ирттермелле, терĕ.

Ку ĕнтĕ, паллах, диаспора ыйтăвĕсене тата çўллĕ шая çĕклени пулĕччĕ.

Малашлăхра кун пек майсем пулнине пурнăç хăй кăтартса пачĕ. 1999 – мĕш çулхи апрель уйăхĕнче Чăваш Республикинче чăнах та çакăн пек анлă конференци пулса иртрĕ: унта Раççейĕн 19 регионĕнчи, Белоруссири, Эстонири чăвашсем килчĕç. Вĕсенчен чылайăшне эпĕ паллатăп.

Хӑнасемпе чи сывӑх тӑван пек курса калаҫрӑм.

* * *

Поэзи ҫуначӗ ҫинчен час – часах калаҫатпӑр. Анчах манӑн куҫ умӗнче ҫав сӑнарлӑх курӑнмастчӗ малтан. Сӑвӑ тени ҫӑмӑллӑн янӑрать те чӗлхе ҫинче – ҫавӑнпала ҫапла калаҫҫӗ пуль, теттӗм...

2000 – мӗш ҫулхи пуш уйӑхӗнче регионсем хушшинче пулса иртекен поэзи фестивальне ҫул тытрӑмӑр. Тӑваттӑмӗш ҫул пуҫтарӑнаҫҫӗ Пушкӑрт ҫӗрӗ ҫинче тутар, вырӑс, чӑваш, пушкӑрт поэчӗсем.

Ҫулӗ вӑрӑм пулчӗ. Чӑваш ҫӗршывӗ витӗр тухрӑмӑр. Хуп – хура тӑпраллӑ, нефтьлӗ тутар ҫӗрӗсем тӑрӑх вӗҫтертӗмӗр, сарлака хирсене хыҫа хӑварса, анлӑ юханшывсем урлӑ каҫрӑмӑр. Хусан та, Анат Чуллӑ та курӑнми пулса тӑрса юлчӗҫ. Кӗтсе илчӗ пире тусемлӗ, сӑртсемлӗ Пушкӑрт ҫӗрӗ. Пелепей тӑрӑхӗ пушшех те илемлӗ. Тӗлӗнмелле хитре тусем кунта... Шӳрекеллӗ, сӗвекрех тӑвӗсем – ял сывӑхӗнчех. Кӑйкӑр пек ҫунатланса – ыткӑнса лараканнисем вара – инҫетре. Капмар та мӑнаҫлӑ вӗсем. Тӑрӑххӑн – тӑрӑххӑн инҫетри виҫесӗр –

лёхрен шуса килеççĕ. Тăррисем космодром пек тӳп–тӳрĕ, симĕс куракпа ешереççĕ, аяккисем вара–чул та тăпра. Вĕсене пĕрре курсанах çын чĕрине вĕçес туйăм тӳпенелле калама çук пысăк хăватпа туртма пуçлать. Чăнах та, вĕçес килет, чăнах та сăвă çырас килет... Пушкăрт тĕнчи – поэзи тĕнчи. Пирĕн чăваш литературине те вилĕмсĕр икĕ поэт парнеленĕ вăл – К.В.Иванов тата Ухсай Яккăвĕ.

«Илхэм шешмелеры» – çапла янăрать пушкăрт чĕлхипе «Асамат кĕперĕ» ятлă поэзи фестивалĕ. Январь пуçламăшĕнчех сăвăçсем хăйсен хайлавĕсене конкурса тăратнă. Пуш уйăхĕнче вĕсене ятарлă комисси пăхса тухса призерсене тата лауреатсене палăртнă. Ака уйăхĕн 7–8–мĕшĕсенче çак регионсем хушшинче йĕркеленĕ поэзи фестивалĕ хăйĕн юлашки турне irttерчĕ.

Чăваш Республикинчен кайнă пирĕн ушкăнра ЧР президентăн пулăшаканĕ А. Смолин, Культура тата национальноçсен ĕçĕсен министерствин тĕп специалисчĕ П. Сидоров, Вĕрентӳ Министерствин тĕп специалисчĕ И. Каптеева, Чăваш Наци

Библиотекин комплектаци пай пуçлăхĕ З. Оферкина, В. Кервен сăвăç, ЧР культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Г. Смирновăпа Валерий Семенов юрăçсем тата Н.Смолина çамрăк хĕрупраç – сăвăç.

Пелепей хулинчи «Урал – Батыр» наци – культура центрĕнче çӳллĕ шайра йĕркеленĕ чыслă лару – тăрура фестивалĕн юлашки тапхăрĕ пуçланчĕ: тутарла, пушкăртла, вырăсла юрласа кĕтсе илчĕç пире. Чăваш наци культура автономийĕн членĕсем те хутшăнчĕç.

Слакпуçри «Нарспи» фольклор ансамблĕ чăваш ташши – юррисемпе паллаштарчĕ, çак пысăк фестивальте çухалса каймарĕç вĕсем.

Тĕрлĕ саслă, тĕрлĕ тумлă халăх хушшинче эпĕ пушкăртсен паллă поэтне Мустай Карима шырарăм. Чăваш Патшалăх университетне вĕренсе пĕтернĕ чухне эпĕ унăн пултарулăхне тĕпчесе диплом ĕçĕ çырнăччĕ, Мустай Каримпа çырусем çӳретнĕччĕ. Вăл мана хăйĕн сăнӳкерчĕкне те, кĕнекине те асăнмалăх ярса панăччĕ. Кайран, алла диплом илсен, Елчĕк районĕнчи Кушкăри сакăр класлă шкулта

ёҫленӗ чухне Николай Дедушкин — диплом ертӳҫи, мана телеграммӑпа чӗнсе илнӗччӗ. Мустай Карим Шупашкара килчӗ, эпӗ унпа тӗл пулса калаҫрӑм. Паянхи кун та ҫав самантсем асра.

Тӗнче литературинче пысӑккӑн палӑрнӑ писатель санпа ҫын вырӑнне хурса калаҫни, пил пани чунра Илемлӗх, Пултарулӑх Хавалӗ ҫуратать, ҫӗклентерсе ярать.

Шел, питех те шел. Кӑҫал Пушкӑрта икӗ хут кайса килсе те Мустай Карима тӗл пулаймарӑм. Чирлет терӗҫ. Ҫулсем иртеҫҫӗ, пурте ватӑлса пыратпӑр. Виличчен Николай Степанович Дедушкинпа ыррӑн ларса калаҫайманшӑн хама ӳпкелетӗп. Каҫартӑрах ӗнтӗ мана епле те пулин...

Сӑмахӑм малалла Пушкӑртри поэзи фестивалӗ ҫинченех.

Пушкӑрт ҫӗрӗ — шывӗ паллӑ сӑвӑҫ — писательсем сахал мар ҫуратса ӳстернӗ: Марина Цветаева, Денис Буляков, Мустай Карим, Константин Ивановпа Ухсай Яккӑвӗ, Гульфия Юнусова тата ыттисем те. Паллӑ писательсем ҫуралнӑ вырӑнсене, Пелепей хулинчи педучилищӗне, Чӑваш гимназине,

Слакпуçĕне, шкулсемпе выранти художниксен пултарулăх мастерскойĕсене çитсе куртăмăр.

Поэтсене, çыравçăсене, искусство ĕçченĕсене пĕтĕмĕшле илсен, хисеплеççĕ кунта. Гонорарсем лайăх тӳлени пирки те пĕлтĕмĕр, кĕнекесене бюджетран укçа уйăрса кăларнине курса ĕнентĕмĕр. Шел, ку енĕпе пирĕн лару–тăру пач урăхла: вĕçĕмсĕр спонсор шыраса хăшкăлатпăр

Поэзи фестивалĕн ĕçне Пелепей хула пуçлăхĕ Риф Газизов хутшăнчĕ, чылай хутчен сăмах тухса каларĕ. Чăннипе калас пулсан пушкăртсем хăна пăхма ухута халăх: кăмăлĕсем те, кĕреки те сарлака. Фатых Карим ячĕпе хисепленекен премие фестивале хутшăнакан кашни халăхăн чи пултаруллă поэчĕсем илме тивĕç пулчĕç: тутарсен поэчĕ Радик Гаташ, пушкăртсен – Гамир Фазлы, вырăссен – Александр Филиппов, чăвашсен – Анатолий Смолин.

Пушкăрт çĕрĕ çинче паянхи кун та чăваш сăвăçисем çуралаççĕ, иккен, илемлĕ сăвăсем çыраççĕ. Поэзи фестивалĕнче Зинаида Сурпан чăваш хĕрĕн сăввисем иккĕмĕш вырăн йышăнчĕç.

Пулать вӗт‑ха пурнӑҫра ҫапла. Чӑваш тӗлне пушшех те пуль. Уява ертсе пыракан конферансье З. Сурпанӑн пакетне йӑнӑшпа таҫта ҫухатнӑ. Сцена ҫинчи мӗнпур халӑх хушшинче чӑваш хӗрӗ, парнесӗр юлнӑскер, йӑлт ҫухалса кайрӗ. Кулисӑра кайран йӗрсе те пӗтрӗ. Макӑраканскернех преми тыттарчӗҫ вара, анчах та халӑх умӗнче мар, шӑв‑шавлӑ тӗрткелешӳре ҫеҫ...

Никам та айӑплӑ мар. Анчах темшӗн ҫапла пулса тухать пурнӑҫра: хӗвел пӑхнӑ вӑхӑтрах ҫумӑр ҫӑвать. Асамат кӗперӗ шӑпах ҫавӑн чухне карӑнать те вара...

Часах тепре те килӗпӗр‑ха эпир Пушкӑрт ҫӗршывне, хамӑрӑн чӑваш поэзи классикӗн К.В.Ивановӑн 110 ҫулхи юбилейне паллӑ тума Слакпуҫне савӑнса ҫитӗпӗр.

Чӗвӗнсе вӗҫекен тусем вара пире ҫуначӗсем ҫине лартса Чӑваш енне вӗҫтерсе ячӗҫ. Чӳречерен пӑхса пынӑҫемӗн А. Смолин калать: «Атьӑр‑ха, пӗр тӑвне хамӑрпа пӗрле илсе кайӑпӑр», ‑ тет.

‑ Ӑҫта лартӑпӑр‑ши ӑна? ‑ тесе ыйтатпӑр унран.

— Шупашкар варрине, — хуравлать вăл. — Поэзи тăвĕ валли вырăн тупăнĕ. Часах Слакпуçне илсе кайĕ вăл пире хăйĕн çине лартса.

* * *

Çак çул çӳрев очеркĕсене календарь страницисене пăхăнса çырмастăп. Асра юлнă пулăмсен пĕлтерĕшĕ пурнăç çаврăмне хăйне май туртса кĕрсе кайнине туйса çыратăп. Самар тăрăхне тата тепре те кайса курма тӳр килнĕччĕ. Çула май Тутарстанри Çарăмсан тăрăхне Çĕнĕ Йĕлмел ялне кĕтĕмĕр: Чăваш халăх поэчĕн Порфирий Афанасьевăн 50 çулхи юбилейне паллă турăмăр. Ял халăхĕ питĕ юратса кĕтсе илчĕ хăйĕн ывăлне. Ăна алă çинче йăтса çӳременни анчах. Самар облаçĕн Исаклă районĕнче чăвашсем питĕ нумайăн пурăнаççĕ, иккен. Унти чăваш библиотекарĕсемпе ЧНБ ĕçченĕсем тата ЧР Культура министерстви семинар — канашлу ирттерчĕ. Ку тăрăхсенче пирĕн паллă çыравçăсем — Стихван Шавлы, Хветĕр Уяр çуралнă. Вĕсен ялĕсенчен килнĕ çынсемпе курса калаçнă май çакна ăнлантăм: халăхшăн пысăк еткерлĕх хăварнă паллă

çынсен ялĕсенче вĕсем вилсен темшĕн пĕр хушă манăçу тапхăрĕ пуçланать. Ку вăл И. Я. Яковлев çуралнă Тутарстанри Кăнна Кушки ялĕ пĕр хушă пĕтме пуçлани те, Çеçпĕл Мишшин тăван ялĕнче, вăл вĕреннĕ шкулта унăн ятне те сахал асăнма тытăнни, чăвашла та манма пуçлани пурччĕ. Кайран вара халăхра вĕсен ĕçне–хĕлне тĕпчесе, еткерлĕхне сума суса, çак пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçсем тунă искусство тата культура çыннисен ятне–шывне çӳле çĕклеме пултаракан çынсем тупăнчĕç.Тен, хăй пуріннă чухне пысăк ĕçсем тунă çынсене курайман, кĕвĕçекен этемсем хăй вилсен унăн ятне те, ĕçне–хĕлне те тĕп тума пуçлаççĕ?.. Аса илер–ха И.Я.Яковлев, Çеçпĕл Мишши, Н.Шупуççыннин тата ыттисен пурнăçне?.. Пушкăртри поэзи фестивальне кайса килнĕ хыççăн манăн тепĕр ик уйăхранах каллех Пушкăрта, К.В.Ивановăн 110 çулхи юбилейне çитме лекрĕ. Çапах та унчченмалтан Тутарстан республикин Теччĕ районĕнчи Кăнна Кушки ялĕнче аслă патриархăмăр И.Я.Яковлев 150 çул тултарнине паллă тума кайнă çулçӳреве аса илес килет. Яковлев

ятне чыс – хисеп туса çӳле çĕклени ял сăн – сăпатне тĕпрен çĕнетрĕ темелле. Эпĕ маларах та килсе курнăччĕ кунта: ял хушши – çĕпре – лапра, пĕç тĕп таран резина атă тăхăнмасăр та кĕме çукчĕ. Çурчĕсем!?. Мунча евĕр пĕчĕк те лапчăк, хăшин – пĕрин тăрринче мăян ашкăрса ӳсет. Çĕрурайлисем те пур терĕç. Пĕр чӳречеллĕ, карти шерте – вĕрлĕкрен. Калăн, И.Я.Яковлев вилнĕренпе ку ялта истори кустăрми лачакана кĕрсе ларнă, тейĕн. Çыннисем те темле ютшăнарахчĕ. Ялта больница та, лавкка та çукчĕ пулас. Клуб пекки юхăнса ларатчĕ. Паянхи пурнăçа аса илтерекен пĕртен – пĕр çурт вăл – тӳпемре ларакан икĕ хутлă шкул. Шала пырса кĕтĕмĕр те – пĕтĕмпех юхăнма пуçланă, классенче пушă, кабинетсем çук, стенасенчен штукатурка ванса тăкăнать. Çаплаччĕ Кăнна Кушки малтан.

150 çулхи юбилейне хатĕрленсе ЧР правительстви пысăк ĕç туса ирттерчĕ. Иккĕмĕш хут яла пырса кĕтĕмĕр – паллама çук: урамсене асфальт сарнă, çурт – йĕрсене юсанă, сăрланă, клуба йăлтах çĕнетнĕ, юнашарах часовни туса лартнă,

çырмасем урлă кĕперсем хывнă, И.Я.Яковлев уçнă шкулăн пĕр çурчĕ сыхланса юлнă — унран музей йĕркеленĕ. Шупашкарти Чăваш наци музейĕн ĕçченĕсем, Юрий Матросов художник кунта нумай вăй хунă. Чи малтан çапла автобус çинчен антăм та И.Я.Яковлев çуралнă ялта — хам та сисмерĕм — куççульпех йĕрсе ятăм. Эпĕ мĕн ачаран унăн ятне асра тытса ӳснĕ чăваш хĕрĕ — патриарх тунă ĕçсене чăваш çăлăнăçĕ выранне хурса, ĕненсе ӳснĕскер — вăл утса çӳренĕ, чупнă сăваплă çĕр çинче! Хам сисмесĕрех ял ачисен куçĕсенче унăн сăнне шыратăп, вăл утнă ура йĕррисем те таçта пур пекех туйăнаççĕ. Çак сывлăшра, çак тăрăхра Вĕрентекенĕмĕрĕн чунĕ пурах—тăр. Эпĕ çавна туйса тăтăм.

Паллах, пысăк уява РФ тава тивĕçлĕ, Чăваш халăх артисчĕ Геннадий Терентьев И.Я.Яковлев сăнарĕпе халăх умне тухса, вăл çырса хăварнă Пехил сăмахĕсене вулани те çак туйăмсене хускатрĕ пуль...Ял çыннисем те, малтан юмахри вилнĕ ялти çынсем пек пурăнаканскерсем, чĕрĕлчĕç: чăвашла йăвашшăн та ăшшăн куçран пăхса

пуплеме пуçларĕç. Унтан тĕлĕнмелли те тупăнчĕ — Чăвашрадиона, манăн передачăсене те итлеççĕ, ытти журналистсен ячĕсене те лайăх пĕлеççĕ.

И.Я.Яковлев пурнăçланă пархатарлă ĕç чăвашсене çеç мар, ку тăрăхра пурăнакан ытти халăхсене те — тутар, мăкшă, ирçе халăхĕсене ырă витĕм кӳнĕ. Çавăнпа уявра вĕсем те сахал марччĕ. Таврари тăхăр ялтан пуçтарăннă çынсем.

Хăй вăхăтĕнче Кăнна Кушки сала пулнă, кунта пысăк пасарсем пуçтарăннă. И.Я. Яковлев уçнă унти шкулта 600 ача вĕреннĕ, халĕ вара — 60 ача çеç парта хушшинче ларать.

Эпир пынă кун Вăйă лапамĕнчи пасарти пек халăх шавлатчĕ.

Чăваш Республикинчен килнĕ, сумлă делегацие Тутарстанăн Теччĕ район администраци пуçлăхĕ Марат Чавлеев, президент аппарачĕн представителĕ Аркадий Фокин, Культура министрĕ Марсель Таищев, Хусанти чăвашсен культура центрĕн ертӳçи Николай Степанцев кĕтсе илчĕç.

Тутарстанри чăваш диаспоринче

Василий Дедушкин ятлă çын пурччĕ, вăл шăпах Н.Дедушкин писателĕн шăллĕ иккен. Вĕсен кукашшĕ И.Я.Яковлевăн ямшăкĕ пулнă. Музее вăл кукашшĕ çавăн чухне тăхăнса çӳренĕ хĕрлĕ кĕпине парнелерĕ

Кăнна Кушкине Тăвай районĕнчи Енĕш Нăрваш шкулĕнче ĕçлекенсем хаклă парнепе килнĕ. Яковлев вĕсен ялĕнче вуникĕ хутчен пулса курнă теççĕ. Вăлах унта шкул уçнă. Вĕсем шкул реликвийĕпе патриархăн сăнӳкерчĕкĕсене, асаилӳсен кĕнекине, тĕрлĕ картинăсем илсе килнĕ.

Çĕнелнĕ Кăнна Кушки ялĕ ӳкерчĕк çинчи пек: пăхса ытарма çук. Мĕн уйрăмах тĕлĕнтерет: хуть хăш тăрăхра пурăнаççĕ пулсан та чăвашсем, чухăн – и, пуян – и, – çурт йĕрне йĕри – тавра çавăрма тăрăшаççĕ, чунпа çывăххăн курса калаçма пĕлеççĕ, «тăван» сăмаха чи малти вырăна хураççĕ.

Асфальт сарнă урамсем ик айккипе ял çыннисем сăра сĕтелĕ илсе тухса лартнă: эрехпе мар, сăрапа, кукăльпе сăйлаççĕ. Эпĕ ял çыннисенчен И.Я.Яковлев çинчен мĕн астуса тăнине ыйтса пĕлешĕн пултăм:

– Ял халăхне вăл хăйĕн укçипе çак

тăрăхри темиçе çĕр теçеттин çĕр туянса панă тесе каласатчĕç ваттисем.

– Кунтан Чĕмпĕре çити ун валли йывăç пуракпа вир пăтти кучченеç илсе кайнă тет. Вир пăттине питĕ юратнă тет вăл. Чĕмпĕре çитиччен çуран кайсан та, çав вир пăтти сивĕнмен тет вара...

– Çулласенче çемйипех кунта канма килнине каласа паратчĕç асаттесем. Кăнна шывĕ хĕррине чатăр карса вырнаçатчĕç тет.

– Çав тери тĕреклĕ те пысăк сынччĕ тесе каланине илтнĕ ваттисенчен.

– Çав сăрт тӳпеминче ача чухне ăна пĕр чикан майри юмăç пăхса панă тет: «Питĕ пысăк çын пулатăн, улпута тухатăн» тесе каланă тет.

Çавăн пек хавхасем халăх çинче.

Уяв вĕçленсен, каялла çула тухрăмăр. Автобус çине ларсан, хам сисмесĕрех куçран куççуль тумлама пуçларĕ. Хаклăран та хаклă вырăн – патриархăмăр чупса çӳренĕ сăртсем, сукмаксем, ял пĕтĕмпех – пĕтĕмпех ĕмĕрлĕхе асра юлчĕç.

Сывă пул, сывă юл, сăваплă çĕр. Тепре килсе курайăп – ши?..

* * *

Чăваш халăхне с у т т а кăларнă патриархăн пултаруллă вĕренекенĕ, «Нарспи» поэма авторĕ çуралнăранпа кăçал 110 çул çитрĕ. Çав ятпа Шупашкартан эпир каллех Пушкăрта икĕ автобуспа çула тухрăмăр. Делегаци ушкăнĕнче — Чăваш Патшалăх Çамрăксен театрĕн артисчĕсем, В.Туркай, Ю.Силэм, А.Кибеч çыравçăсем, ЧП Канашĕн депутачĕсем, Красноармейски район ертӳçи Станислав Николаев, ЧР Патшалăх пичет комитечĕн ертӳçи В.Андреев тата ыттисем те. Делегацине ЧР Культура министрĕ О.Г.Денисова ертсе пычĕ.

Çичĕ кун Пушкăрт çĕрĕ çинче утрăмăр, çичĕ кун Константин Иванов çуралса ӳснĕ çĕрсем–шывсем тăрăх çӳрерĕмĕр, Хушăлкапа Слакпуç çыннисемпе паллашрăмăр, Пелепей хули урамĕсем тăрăх утрăмăр. Манăн кăмăлăм поэзилĕх çăлкуçне шырарĕ. Поэзилле легендăлăха эпĕ çутçанталăк ытамĕнче ытларах туйрăм: сăртсемпе айлăмсен ирĕклĕхĕнче, шурă хурăн катисен ĕлккенлĕхĕнче «Нарспи» поэма сыпăкĕсем асăма килсе çуралаççĕ:

Пуш уйăхĕн вĕçĕнче
Хĕвел пăхрĕ ăшăтса.
Аслă Силпи ялĕнче
Юр ирĕлчĕ васкаса...

Акă, çеремлĕ сăртран ял кĕтĕвĕ тĕпĕртетсе – чупса анчĕ те, ял умне çитсен, тăпах чарăнчĕ. Тепĕр сăртламра вара анăçри хĕвелĕн юлашки пайăркисем çинче шурă кĕпе тăхăннă хĕрсем карталанса вăйă вылярĕç. Çамрăксен театрĕн артисчĕсем «Нарспи» поэма сыпăкĕсем тăрăх телепоэма ўкерчĕç. Чăваш телевиденийĕн тĕп режиссерĕ Валерий Иовлев 4 кун хушши хĕвел тухса хĕвел аничченвĕсемпе ĕçлерĕ. Артистсен ĕçĕ çав таранччен йывăррине хам куçпа хам курса ĕнентĕм пирвайхи хут. Кирлĕ сăрт çамки, кирлĕ юханшыв, кирлĕ хурăн е хĕвел пайăрки тытмашкăн, кирлĕ сценăна хатĕрлесе çитерсе ўкермешкĕн çитмĕл çичĕ тар тухать артистсен.

Çу уйăхĕн 25 – 27 – мĕшĕсенче К.В. Иванован 110 çулхи юбилейне паллă туса сахал мар тĕлпулусем пулса иртрĕç Пушкăртстанăн Пелепей районĕнчи Слакпуç ялĕнче.

Асăну мемориалĕн комплексне

кĕрекен ялти Культура керменĕнче вара савăнăçлă та чыслă каç пулса иртрĕ. ЧП Çамрăксен театрĕн артисчĕсем илемлĕ концерт лартса пачĕç. Сцена çине Владимир Григорьев тухсан, Кĕçтенттин поэтăмăр чĕрĕлсе тăнăнах туйăнса кайрĕ: халăх çак чăнлăха йышăнса тăруках алă çупса ячĕ...

Уява хисеплесе Пушкăртстанăн влаç тытăмĕн яваплă çыннисем те чылайăн килнĕччĕ: культура министрĕ Рафаиль Шафиков, Пелепей хула тата район ертӳçи Риф Газизов, Пушкăртри Чăвашсен Канашĕн ĕç тăвакан комитечĕн председателĕ Георгий Шурпанов, «Урал сасси» хаçат редакторĕ Юрий Михайлов, Ĕпхӳри телевидени пуçлăхĕ Юрий Тарасов.

Слакпуçри «Нарспи» фольклор ансамблĕ хăйĕн пултарулăхĕпе савăнтарчĕ. Вĕсемпе юнашар тăрса сăнӳкерчĕк ӳкертĕмĕр: тумĕ, каласăвĕ, юрри – таштин хăйнееверлĕхĕ питĕ тĕлĕнтерчĕ: йăрăм – йăрăм чăваш тĕррилĕ, тĕртнĕ пир – кĕпе масмаксем, шĕлкеми – хушпăвĕ кунта музейре çеç мар, халăхра та самаях упранаççĕ. Хутламлă – пĕрĕмлĕ саппун

вĕçĕсенче чăмăрккаллă шерепесем, кĕпе умĕсенче тата хул çаннин тĕррисенче – кунта эпир питех пĕлмен тĕрĕсем.

Эпĕ К.Иванов пирки халăхра упранакан асаилÿсем çинчен ыйтса пĕлме тăрăшрăм. Елена Данилова учительница çапла каласа пачĕ:

– Ялта çапла астăваçç: ашшĕ Кĕçтентти поэт пулнине, сăвăсем çырнине юратман, унăн хучĕсене /алçырăвĕсене ĕнтĕ/ нумай çунтарса янă, тет. Апла пулман пулсан поэтăмăрăн хайлавĕсем, тен, чылай ытларах упранса юлнă пулĕччĕç...

Кĕçтентти вилсен вара пытарма пынă ял çыннисене пурне те унăн кĕнекине /Нарспи» поэмăна/ салатса пачĕç тет.

Учительница халĕ К.В.Ивановăн йăх – несĕлĕсен пурнăç йывăççине тĕпчесе хатĕрлет. Ял музейсемпе пуян. К.Иванов музейĕсĕр пусçне шкулта самаях пысăк краеведени музейĕ те пур. Унта пир станĕ, кĕслесем, хунарсем, авалхи тĕрĕллĕ чăваш кĕписем, ялти паллă çынсен сăн – ÿкерчĕкĕсемпе ĕç хатĕрĕсем

К.В.Иванов музейĕ вара – ашшĕ, Васинкка пуян лартнă çурт. Ăна çырмари

хăлаç сарлакăш чулсене йатса хăпартса якатса пĕр – пĕрин çине ювелир меслечĕпе вырнаçтарнă. Таврара çакăн пек çурт çук. Улпут пÿрчĕ евĕрлĕ: хăнасене йышăнмалли, апат çимелли, çывăрмалли уйрăм пÿлĕмсем.

Чĕрече рамисемпе алăкĕсене Кĕçтентти тунă теççĕ Поэт хăй аллипе йывăçран ăсталанă пичетлемелли машинка та пур. Çуртне К.В.Ивановăн 100 çулхи юбилейĕ тĕлне штукатуркăланă. Эпĕ студент вăхăтĕнче 25 çул каялла кайса курнă чухне катрам – катрам чул сийĕсем çаплахчĕ – ха, хыçалти хуралтăсем халĕ те ĕлĕкхи пекех

Тăхтаман ялне, Хушăлкана пырса кĕтĕмĕр. Ял варринчи хĕрарăмсене курсан, тÿрех вĕсемпе паллашма васкарăм: Елена Архипова – Хушăлкари ялхуçалăх пĕрлешĕвĕн экономисчĕ тата ялти чиркÿ казначейĕ, тата... «Тăхтаман тăванĕ» тесе паллаштарчĕ хăйне.

Çапах та «Нарспи» поэмăри ĕçсем поэт пуçĕнче çуралнă фантази маррине çирĕплетекен тепĕр чĕрчĕлĕхех пулчĕ пулас çак тĕлпулу.

– Ăçтарах пурăннă тет вара Тăхтаман? – ыйтрăм эпĕ.

—Авă, клуб вырăнĕнче пулнă вĕсен килĕ,—тет хайхи.

—Сирĕн ялта паянхи кун Нарспипе Сетнер, Тăхтаман ятлă çынсем пур—и?

—Çук. Тасти пĕр чăваш ялĕнче Нарспи ятлă хĕрарăм пурăнать, теççĕ

Хушăлкара кил—çуртсене газ, шыв кĕртнĕ, ача сачĕ, лавкка, почта, шкул пур, урамсене асфальт сарнă. Анчах та çамрăксем пурпĕрех ялта пурăнасшăн мар. Инçетри хуласене тухса кайса укçа ĕçлесе илме тăрăшаççĕ. Хăшĕсем вара каялла таврăнаççĕ, çурт—йĕр çавăраççĕ.

Ялхуçалăхĕнче укça ĕçлесе илеймеççĕ иккен кунта та, ытларах выльăх—чĕрлĕх усраса, пахчаçимĕç суткаласа ал—ура çавăраççĕ. Мĕн тарăхтарать Хушăлка çыннисене? Вăл —эрех те укçа. Ирĕксĕрех К.Ивановăн сăмахĕсем аса килчĕç:

Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен.
Шывсем çинче, çĕр çинче
Хуçа пулса вăл тăрать.

Анчах вăйлă этем те
Хăй тĕнчине пăхăнать.
Укçапала эрехех
Çынна ăсран кăларать.

Вилӗмсӗр сӑмахсем — истори чӑнлӑхӗ. Хушӑлкара истори палӑкӗсем урӑх ҫук. Ялӗ те кичемрех пек туйӑнчӗ.

Артистсем кинопоэма ӳкерме ял ту-лашне тухрӗҫ. Шӑнкӑрти тӑрӑ шывсем, ҫӑлкуҫсем, сӑрт-ту илемлӗхӗ кунта та ытарайми. Акӑ, сукмак авкаланса вӑрманалла кӗрсе каять. Ялӑн тепӗр енче-татах хурӑн катисем хӗрсен ушкӑнӗ пек карталанса тӑраҫҫӗ.

Хӑш ҫулӗпе, хӑш сукмакпа Нарспи Тӑхтаман килӗнчен тухса тарнӑ-ши?..

* * *

Авӑн уйӑхӗн пуҫламӑшӗ. Сарӑ ту тӑ-рӑхӗнче Чӑваш литературипе культурин кунӗсем пыраҫҫӗ. Эпӗ хальхинче официаллӑ хроника пайне питех ҫыраслӑн мар: яланхиллех хӑй йӗркипе, хӑй майӗпе пычӗ вӑл.

Сарӑ ту тӑрӑхӗнчи Вольск районӗнчи Калмантай ятлӑ чӑваш ялӗ ҫинчен каласа парасшӑн.

Ҫул тӑршшӗпех ку тӑрӑхри вырӑнсене пӑхса пыратӑп. Чылайранпа ҫумӑр ҫуман кунта кӑҫал. Ҫӗр типсе-

сарăхса кайнă. Чăваш енчи пек ешĕл çарансем çук. Питĕ анлă горизонтра сĕвекрех хушка е калпак евĕр тăхăннă вăрманлă тусем, пĕчĕк ĕшнесем е катасем вĕлтлетсе юлаççĕ. Ялсем сайра тĕл пулаççĕ. Унти çуртсем вара кивĕ, çĕннисем çукпа пĕрех. Вырăс ялĕсемпе чăваш ялĕсен уйрăмлăхĕ тӳрех куçа курăнать: вĕсен икĕ хутлă, йĕри-тавра чӳречеллĕ, карта-хуралтăсăр çуртсем. Чăваш ялне сăнран пăхсах уйăрма пулать: чӳрече хашакĕсем те, курници-веранди те, йĕри-тавра çавăрнă сарай-кĕлечĕ те, мунчи те, карти те пур. Çĕр нумай кунта. Çавна пула пурăнма çăмăлтарах тесе калаçнине илтрĕм нумаях пулмасть пурăнма куçса килнĕ Куславкка чăвашĕнчен.

Хăйнееверлĕ анлă илемлĕх туйăнать. Калмантай ялне çитерехпе тĕве курма та тӳр килчĕ. Хирсенче вара ытларах хĕвелçаврăнăш пуç усса ларать. Балаково хулинче таса та техĕмлĕ çу уçлаççĕ. Тутанса та, туянса та пăхрăм. Виноград та туса илеççĕ кунта. Ытти вара пирĕн çĕрти майлах пулĕ.

Калмантай ятлă чăваш ялĕ айлăм

вырӑнта, Алай шывӗ хӗрринче вырнаҫнӑ. Сӑнран пӑхсан кунти чӑвашсем кӑшт тӗксӗмрех. Курнӑ—курман пӗр—пӗрне ӗмӗр пӗлнӗ пек ҫывӑххӑн калаҫма пуҫларӑмӑр.

Калмантай округӗн администраци пуҫлӑхӗ Ольга Васильевна Губанова — кунти чӑваш хӗрарӑмӗсем пекех хыпаланчӑк та ӗҫлӗ.

—Йывӑр мар—и сире хӗрарӑм пуҫпа ҫакӑн пек йывӑр ҫӑка хулпуҫҫи ҫине тиеме?— Манӑн пӗрремӗш ыйтӑвӑм ҫапла пулчӗ.

—Ҫӑмӑл мар та, мӗн тӑвас тетӗн? Арҫынсем кахалрах пирӗн, ытларах эрех енне сулӑнаҫҫӗ. Вольск районӗнче матриархат темелле. Округ пуҫлӑхӗсенчен чылайӑшӗ — хӗрарӑмсем.

—Ял ҫинчен тӗплӗнрех каласа парӑр—ха. Мӗнле пурӑнатӑр эсир, кунти чӑвашсем? Ҫурт—йӗр епле ҫавӑратӑр? Выльӑх—чӗрлӗхрен мӗн усратӑр? Мӗн ӗҫлетӗр?

— Ҫуртсене йывӑҫран тӑватпӑр. Ниме йӑли пирӗн те пур. Ушкӑнпа, ялӗпе пухӑнса купалатпӑр. Вӑрмансем пуян: юманӗ те пур,

ăвăсĕ те. Çурт никĕсне, паллах, юманран хыватпăр, пурине ăвăс пĕренисенчен купалатпăр. Кăçал çырла‒кăмпа чылай пулчĕ. Хĕл кунĕсене кĕтсе илме аван хатĕрлентĕмĕр. Çĕр ирĕклĕ: мĕн чухлĕ илме пултаратăн, çавăн чухлĕ параççĕ. Картухха/çĕрулми/, мурка/кишĕр/, купăста, хăяр‒помидор ӳстеретпĕр, сухан‒ыхра туса илетпĕр. Хирсенче‒тулă, ыраш, сĕлĕ, хĕвелçаврăнăш. Ялта газ кĕртни виççĕмĕш çул, шыв та пăрăхпа кĕрет. Çакă пурнăçа питĕ çăмăллатать. 300 вырăнлă клуб, ача сачĕ, медпункт, лавкка пур.

Калмантай ялĕ, архив хучĕсем пĕлтернĕ тăрăх, 1623‒мĕш султанпа йĕркеленсе кайнă, теççĕ. Паянхи кун ялта ‒ 300 кил хуçалăхĕ, 700 çын пурăнать. Çамрăксем ялтах юлаççĕ.

Ольга Васильевна хăй хĕрĕхе çитеймен‒ха. Упăшкипе иккĕшĕ ывăлпа хĕр çитĕнтереççĕ; пĕри‒институтра, тепри шкулта вĕренет. Упăшки халлĕхе ĕççĕр ларать иккен, килти хуçалăхра тăрмашать.

Çĕр хура кунта, шыв аван, ытларах пусă чаваççĕ. Сад пахчисем те пур. Анчах та юлашки вăхăтра ырă мар йăла пурнăçа

кĕрсе пырать. Таçтан темле çынсем килсе килти выльăх — чĕрлĕхе вăрлама пикеннĕ. Çакă ял çыннисене питĕ пăшăрхантарать.

Ĕлĕкрех ку ялта каçхине вăййа тухнисене те астăваççĕ хăшĕсем. Хĕрсем мандолинăпа балалайка каласа утатчĕç урам тăрăх, теççĕ ватăсем. Халĕ çак йăла пĕтнĕ.

Сарă ту çĕршывĕнче чăвашсене пĕр — пĕринпе хутшăнма пулăшакан, кунти диаспора ыйтăвĕсене çĕклесе яракан Василий Николаевич Якушев çинчен асăнмасăр май çуках.

— Чăваш наци ыйтăвĕсене çĕклес тесе мĕне пула пуçăнтăр? — тесе ыйтрăм унран.

— Ыратрĕ, ыратрĕ те чĕре, пĕр кун хыпса — çунса кайрĕ, — терĕ.

Саратов облаçĕнче Чăваш Наци культура автономийĕ ĕçлет. Кунта чăваш япалисене сутакан лавкка та пур: кĕпе — тумтир, чăваш юррисен кассетисем, ал шăлли тата ытти киле валли кирлĕ япаласем.

Вырсарни шкулĕ уçма хатĕрленеççĕ, чăвашла хаçат кăларнă.Тăван чĕлхепе радио тата телевидени кăларăмĕсем йĕркелеме хатĕрленеççĕ. Ĕмĕчĕсем пысăк, вĕсем пурнăçа кĕччĕрех.

* * *

Мари, Пушкӑрт, Самара е Саратов, Мускав тӑрӑхӗнчен тавранатӑп – и каялла Чӑваш ене – тӗлӗнме пӑрахмастӑп: пӗчӗк оазис пек Чӑваш ҫӗршывӗ: хуп – хура ҫӗр ҫинче ем – ешӗл йывӑҫ курӑк ешерет. Ытти ҫӗрти пек мар парка та ҫурта евӗрлӗ тӳрӗ хырсем чыслӑн тӑрса кӗтсе илеҫҫӗ сана. Утӑмра пӗр вӗҫе – вӗҫӗн ялсем вырнаҫнӑ. Ҫапла, тӑвӑр пурӑнатпӑр. Анчах пирӗн патри пек капмар туса лартнӑ ҫуртсем питех курмарӑм эпӗ. Аякри чӑвашсем ҫапла каланине те илтрӗм: «Чӑн Чӑваша кайса курасчӗ виличчен пӗрре... Эх, унти чӑвашсем вӗренеҫҫӗ тет вара! Ҫуртсем лартаҫҫӗ тет!..»

Вулаканӑм, санӑн шутпа мӗнле пек, ку чӑнах та ҫапла – и?..

Людмила Николаевна Сачкова Патăръел районĕнчи Çĕнĕ Ахпӳрт ялĕнче çуралнă, вăтам шкул, ЧПУн филологи факультетне пĕтернĕ. Шупашкарти, Елчĕкпе Патăръел районĕсенчи шкулсенче чăваш чĕлхипе литератури вĕрентнĕ, «Коммунизм ялавĕ» хаçатра вăй хунă, «Пике» журналта ĕçленĕ. Хальхи вăхăтра — Чăвашрадиора литература пайĕн редакторĕ. Унăн литература, искусство, тĕн, краеведени, философи, хĕрарăмсен ыйтăвĕсемпе хатĕрлекен передачисем эфирта вĕçĕмсĕрех янăраççĕ.

Чăваш литературин лавне çине тăрса 1986-мĕш çулта кӳлĕннĕ: «Ялав», «Тăван Атăл «Çилçунат» журналсенче, «Хыпар» хаçатра, тĕрлĕ сборниксенче çине-çинех пичетленнĕ. 1996-мĕш çулта унăн пĕрремĕш кĕнеки «Чĕкеçĕм, чĕкеç» кун çути курнă.

Писателĕн чĕлхи çепĕç те чăн-чăн чăвашла пуян, техĕмлĕ. Психологиллĕ литература портречĕсем Чеховăн сăнарĕсем енне туртăнаççĕ, çав вăхăтрах вĕсем уйрăм тапхăршăн, наци сăнарĕшĕн символлă.

1998-мĕш çулта Чăваш Патшалăх пукане театрĕ унăн «Шăпăрлан» пьесине сцена çине кăларнă.

Чăваш Патшалăх Çамрăксен театрĕ халĕ Людмила Сачкован иккĕмĕш пьеси тăрăх хатĕрленĕ «Юрату Турри» романтикăлла баллада спектакль лартать. Ку вăл-питĕ хăйнеевĕрлĕ, чăвашлăх темипе витĕрленнĕ аллегорилле хайлав.

# ТУПМАЛЛИ

Ытарайми куҫсем /прозӑлла сӑвӑ/ .......... 3
Хӗреслӗ ҫул /прозӑлла сӑвӑ/ .................... 9
Сӗвем – сӗвем шур шухӑш
/прозӑлла сӑвӑ/............................................ 12
Шурӑмпуҫпе /баллада/ ................................ 17
Кӗтӳ хӑваланӑ чух /калав/.......................... 25
Пыра ларнӑ ҫӑкӑр /калав/ .......................... 37
Чике старик ӗмӗчӗ /калав/ ........................ 46
Ҫӑкӑр ӑшшиллӗ хӗрарӑм /очерк/ ........ 57
«Сывӑ – и, аякри тӑван?»
/ҫул очеркӗсем/ ............................................ 67

САЧКОВА
ЛЮДМИЛА НИКОЛАЕВНА

# ЧАРУЮЩИЕ ГЛАЗА

Стихи в прозе,
рассказы, баллада, очерки

на чувашском языке

Редактор Кушманов Н.К.
Художник Агеев В.И.

Сдано в набор 25.10.2000 г. Подписано к печати 20.11.2000 г. Формат 70x108 1/64
Бумага офсетная. Гарнитуа Baltica.
Уч. – изд. л. 2,1. Тираж 1000 экз.
Цена свободная

Издательство Писательского фонда ЧР «Калем».
Лицензия № 030927 от 10.09.99 г.

